Библио... им. М. Горького №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

1953 çул Май 13 юнкун № 94 (9003)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Çураки хăвăртлăхне ӳстерер! (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: А. Антонова.—Çĕмĕрле райкомĕ политикăлла агитацие хакламасть (2 стр.).
Т. Кружилин.—Тăпран сухалакан сийне тарăнлатасси (2 стр.).
Лекцилле пропагандăна ертсе пырас пулать (2 стр.).
КӲРШĔ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧЕ: М. Селюкин. — Мордва халăхĕ çак кунсенче (3 стр.).
КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ. В. Антонов — Ачасем валли çырнă сăвăсен кĕнеки (3 стр.).
В. Игнатьев.—Ялти клубăн паянхи ĕçĕ (3 стр.).
Корейăра В. И. Ленинпа И. В. Сталин ĕçĕсене пичетлесе кăлараççĕ (4 стр.).
Пĕтĕм Китайри профсоюзсен VII-мĕш съезчĕ (4 стр.).
Францири коммуна мэрĕсен суйлавĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Н. Минин.—Герой-хула валли (4 стр.).
Ултă республикăри çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ (4 стр.).

Государство дисциплинине çирĕп тытса пымалла

Коммунистсен партийĕ—совет халăхне çул кăтартса тата ертсе пыракан аслă парти—хăйĕн кадрĕсене, мĕнпур ĕçсыннисене государство интересĕсемпе халăх интересĕсемшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшма вĕрентет. Паттăррăн ĕçленипе совет çыннисем хăйсен тăван государствин хăватне вăйлатаççĕ. Совет государстви халăхсен мĕнпур материальнăй тата культурăлла вăйĕсене вĕçĕмсĕр чечеклентерсе пыма майсем уçса пачĕ.

Социализм строительствин опычĕ çакна кăтартса парать: пирĕн кадрсем халăх ĕçне чĕререн парăнса тăваççĕ, вĕсем хăйсен пĕтĕм практикăлла ĕçĕнче партипе государство интересĕсене тĕп вырăна хураççĕ, хăйсен пĕтĕм вăйне коммунизм тумалли аслă тĕллеве параççĕ. Çак кадрсем вĕсем партипе государствăн ылтăн фончĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем тĕрĕс те тӳрĕ çынсем. Вĕсем партипе государство умĕнчи хăйсен таса тивĕçне лайăх ăнланаççĕ, тĕрлĕ йышши йăнăшсемпе çитменлĕхсене, хуçалăх строительстви енĕпе парти политикине пăснине, государство интересĕсене пăснине чăтма пултараймаççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама партипе государство дисциплинине малалла тĕреклетсе пыни, хăйсене хушнă ĕçсемшĕн пирĕн кадрсен ответлăхне ӳстерни кирлĕ. Парти организацийĕсен, мĕнпур коммунистсен ĕçĕнче партипе государство решенийĕсемпе директивисене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешесси тĕп вырăнта тăмалла, мĕншĕн тесен вĕсене пурнăçлани вăл пирĕн партин политикине пурнăçлани пулать.

Анчах çакна та курмасăр тăма çук: пирĕн хушăра çаплах государство интересĕсене иккĕмĕш вырăна хуракан çынсем тĕл пулаççĕ, парти, совет, хуçалăх работникĕсен пĕр пайĕ партипе государство дисциплинине çирĕп тытса пымасть. Партипе правительство решенийĕсем çине сиелтен, ячĕшĕн пăхакан çынсем те тĕл пулаççĕ, вĕсем çак решенисене пурнăçа кĕртессишĕн кирлĕ пек активлă кĕрешмеççĕ, хăйсен ĕçĕсем начар пынă пирки, çавна май çĕршыв интересĕсене сиен кӳнĕ пирки сахал пăшăрханаççĕ. Уйрăм руководительсем партипе государствăран предприятисемпе учрежденисенче ĕçсем чăннипе мĕнле тăнине пытарса тăраççĕ, хăйсен ĕçне лайăхлатса кăтартаççĕ, туман ĕçпе мухтанаççĕ, плана тултарни çинчен калакан отчетсем çумне хушса çыраççĕ.

Совет государстви Донбасра çурт-йĕр тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тума укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. Çав вăхăтрах уйрăм строительство организацийĕсем государство паракан укçа-тенкĕпе хуçасăрла усă кураççĕ, брак тăваççĕ. Тĕслĕхрен, «Артемжилстрой» трестăн 1-мĕш строительство управленийĕ (начальникĕ Бондарь юлташ) тата 2-мĕш строительство управленийĕ (начальникĕ Гапонов юлташ) çуртсене час-часах сӳте-сӳте тăваççĕ, çапла вара государство укçи-тенкине вырăнсăр нумай пĕтереççĕ. Çак управленисен руководителĕсем иртнĕ çулти декабрьте хăйсем тăратнă отчетсенче 200 пин тенкĕлĕх ытла туман ĕçсене тунă пек кăтартнă. Партипе государство дисциплинине çавăн пек сĕмсĕррĕн пăсни çинчен калакан ыйтăва трест руководителĕсемпе унăн управляющийĕ Верховский юлташ та, партин Горловка хула комитечĕ те сӳтсе явман.

Парти органĕсемпе хуçалăх руководителĕсем государствăна хирĕçле ĕçсем тăвакан, партипе государствăна улталакан çынсем çине çавăн пек килĕшӳллĕн пăхнине татăклăн пĕтерес пулать. Партие чунсăр чиновниксем мар, хăйсен лăпкăлăхне ĕç интересĕсенчен мала хуракан çынсем мар, партипе правительство директивисене пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр паттăррăн кĕрешекен, партипе государство интересĕсене пуринчен те мала хурса кĕрешекен боецсем кирлĕ.

Сайра хутра мар çакăн пек фактсем те тĕл пулма пулать: хăшпĕр работниксем ведомствăлла интерессене, вырăнти интерессене государствăн пĕтĕмĕшле интересĕсенчен мала хураççĕ, партипе государство законĕсене пăсаççĕ. Çавăн пек, «Карагандауголь» комбиначĕн «Карагандауглеразрезы» трестĕнче материальнăй пурлăхсене çирĕп учета илме кирли çинчен правительство кăтартса панине тăтăш пăсаççĕ. Çакăн çинчен Караганда облисполкомĕ те, парти обкомĕ те пĕлеççĕ. Апла пулсан та трест руководителĕсене государствăран материальнăй резервсене пытарса пурăннăшăн ответ тыттарман.

Комплектлă мар, начар пахалăхлă продукци туса кăларакан, начар продукцие пĕррем̆ĕш сорт продукци вырăнне хума пăхакан, çирĕплетсе панă стандартсемпе техникăлла условисене тивĕçтермен изделисемпе тăварсем тăратакан предприятисен руководителĕсем государствăпа потребитель интересĕсене пысăк сиен кӳреççĕ. Плана мĕнле майпа та пулсан тултарма тăрăшса, уйрăм предприятисем паха йышши тĕп продукцисем туса кăларас вырăнне иккĕмĕш вырăнта тăракан изделисем кăларса государствăна сиен кӳрекен çул çине тăраççĕ. Брак туни, комплектлă мар тата начар пахалăхлă продукци кăларни ытти предприятисене пĕр тикĕс ĕçлесе пыма, государство планне тултарма кансĕрлет.

Саратоври станоксем тăвакан завод браксем нумай кăларать. Иртнĕ çул вĕçĕнче унăн руководителĕсем зуборезнăй çĕнĕ йышши çурма автомат тума вĕренсе çитни çинчен шавлăн пĕлтерчĕç, çак çĕнĕ станока ăнăçлă тума тытăннине кинопленка çине ӳкерсе кăтартрĕç. Тĕрĕслесе пăхсан станок юрăхсăр пулни курăннă. Ăна государство комиссийĕ йышăнман. Завод заказчиксене туса çитереймен ытти йышши станоксем те нумай ярса парать. Çакăн пек киревсĕр ĕç техникăлла контроль пайĕн начальникĕ Тарасов килĕшсе тăнипе, завод директорĕ Петренко юлташ тата парторганизаци секретарĕ Гречухин юлташ ытлашши ирĕк панипе пулса пырать. Завод рекламацисем нумай илет, унăн туса çитермен ĕçсене туса çитерме вырăнсене специалистсем ямалла пулать, çапла вара укçа-тенкĕ вырăнсăр нумай тăккаламалла пулать.

Парти организацийĕсен тивĕçĕ вăл — администраци ĕçне тĕрĕслесе тăма панă правăпа туллин усă курасси, государство интересĕсене çирĕппĕн сыхласа тăрасси пулать. Парти организацийĕсем предприятире ĕçсем мĕнле тăнине тĕплĕнрех пăхса тухма, ĕçри çитменлĕхсем мĕнрен килнине тупса палăртма, çак çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре хуçалăх органĕсене пулăшма пултараççĕ.

Парти органĕсен государство çирĕплетсе панă задание кашни предприяти тултармалла тăвассишĕн, халăх хуçалăхне паха продукци памалла тăвассишĕн кĕрешмелле. Государство планĕ вăл кашни предприяти ĕçĕнче закон пулса тăрать. Ăна пĕтĕмĕшле продукци кăларас енĕпе кăна мар тата мĕнпур изделисем енĕпе те тултармалла. Уйрăмах ĕç тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси çине, ĕçĕн пахалăхĕ çине, техникăпа туллин усă курасси çине, производствăри мĕнпур резервсене мобилизацилесси çине тимлĕн пăхмалла. Задача çакăн пек тăрать: социализмла ăмăртăва тата анлăрах сарса ямалла, малта пыракансемпе новаторсен мĕнпур прогрессивла пуçарăвĕсене аталантарса пымалла.

Парти çапла вĕрентет: самокритика тата уйрăмах аялтан килекен критика çитменлĕхсене, йăнăшсене, чир-чĕрсене пĕтермелли тĕрĕсленнĕ хĕçпăшал пулса тăрать. Критикăпа самокритикăна мĕнпур майсемпе вăйлатса, пирĕн парти организацийĕсем государствăна улталаса пурăнакан çынсене, юрăхсăр руководительсене, хăйсене пăхăнса тăракан предприятисен хăйсен вотчини туса хума пăхакан çынсене, Совет государствин законĕсене пăсакансене тăрă шыв çине кăлараççĕ. Критикăпа самокритика вăл—кадрсене воспитани памалли тĕп меслет. Тĕрĕс асăрхаттарса каланă кашни сăмаха тивĕçлипе йышăннă вăхăтрах, руководителĕн çакăнтан хăйне валли тĕрĕс вывод тума пĕлес пулать, массăсен опытне шута илес пулать, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, ĕçе лайăхлатма васкавлă мерăсем йышăнас пулать.

Государствăна хирĕçле туртăмсене, государство дисциплинине пăснисене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн план, финанс тата контроль органĕсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Партипе правительство министерствăсене пысăклатас тата министрсен прависене ӳстерес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса иртнерĕ май, çак органсен ведомствăлла интерессене хирĕç кĕрешессине, укçа-тенкĕпе материальнăй пурлăхсене вырăнсăр расходласа пĕтерессине тата ытти çавнашкал юрăхсăр ĕçсене хирĕç кĕрешессине вăйлатмалла. Кунта сăмах центрта та, вырăнта та экономика, учет тата ревизи ĕçне лайăхлатмалла тăвасси çинчен, ĕçĕн çак участокĕсене квалификацилле тата ĕçре тĕрĕсленнĕ специалистсен кадрĕсемпе тĕреклетмелле тăвасси çинчен пырать.

Хуçалăхпа бюджет организацийĕсен финанс ĕçне тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла, государство планне тултарнине, уйрăммăн илсен, тĕп изделисене номенклатура тăрăх тултарнине, халĕ ĕçлесе тăракан тата ĕçе çĕнĕрен кĕртсе пыракан техникăпа усă курнине, пахалăх тĕлĕшĕнчен стандартсене пăхăнса ĕçленине, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли задание тултарнине çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла тăвас пулать. Уйрăмах тирпейлĕх режимне çирĕппĕн тытса пырассине вăйлатмалла.

Парти организацийĕсен пĕррем̆ĕш тивĕçĕ вăл—мĕнпур работниксене партипе государство умĕнчи ответлăха туйса тăма, тĕрĕсмарлăха нимĕн шеллесе тăмасăр кăкласа пăрахма, кадрсене пирĕн социализмла аслă çĕршывăн интересĕсене çирĕп сыхласа тăма вĕрентесси пулать.

(«ПРАВДА» хаçатăн майăн 12-мĕшĕнчи умстатьи).

Çураки хăвăртлăхне ӳстерер!

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çураки мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

1953 çулхи майăн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Çуртри акни (пĕтĕмпе)	Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем (викăпа пĕрле)	Çурхи тулă	Пĕр çул ӳсекен курăксем	Тымарçимĕçсем	Силос культурисем	Нумай çул ӳсекен курăксем
Красноармейски	67,2	82,5	83,3	84,8	36,6	77,2	96,8
Калинино	62,0	75,9	85,6	77,2	37,6	55,7	113,0
Элĕк	61,9	76,4	81,8	71,6	18,2	51,6	82,8
Комсомольски	61,3	69,6	80,4	69,6	72,5	76,6	89,8
Советски	60,3	79,8	89,9	64,8	21,0	56,1	75,8
Шăхасан	57,1	67,4	84,3	73,2	32,0	50,5	113,4
Елчĕк	56,6	55,6	86,3	39,1	66,6	62,6	60,6
Чурачăк	55,2	66,1	71,0	64,3	37,6	52,2	44,0
Муркаш	54,0	65,7	69,2	73,0	9,5	54,7	89,6
Чкаловски	52,9	57,5	80,3	61,7	82,0	70,0	79,0
Шупашкар	51,8	61,0	66,2	86,9	40,0	75,5	72,0
Сĕнтĕр	50,0	67,1	87,2	56,6	13,9	38,5	104,8
Вăрнар	48,6	67,8	79,3	63,7	23,2	33,8	97,7
Шăмăршă	48,0	52,6	71,4	57,3	17,5	27,8	50,1
Куславкка	47,8	59,1	60,4	52,8	35,0	40,5	101,3
Канаш	46,7	53,8	85,5	48,7	56,0	45,5	97,3
Первомайски	45,5	56,3	78,7	43,7	37,3	15,0	86,4
Хĕрлĕ Чутай	44,7	52,8	59,9	34,4	13,3	22,5	79,3
Ишлей	44,4	55,0	68,2	56,7	27,0	33,8	81,4
Октябрьски	42,4	51,3	67,4	53,2	6,6	40,5	84,3
Йĕпреç	41,9	62,5	82,0	59,1	21,5	51,3	97,0
Çĕрпӳ	41,9	46,8	44,8	71,1	41,8	72,3	103,2
Сĕнтĕрвăрри	41,0	51,7	52,0	60,9	37,6	30,0	122,7
Кувакино	40,8	49,8	68,5	53,5	11,2	5,8	88,3
Вăрмар	40,9	46,1	51,5	67,6	12,0	24,0	103,0
Тăвай	38,6	43,4	62,8	56,0	22,5	30,5	78,4
Çĕмĕрле	35,4	48,7	60,7	51,0	3,0	38,3	37,1
Етĕрне	30,7	45,4	56,4	41,4	14,1	10,0	88,2
Пăрачкав	29,0	33,9	57,4	48,5	6,2	—	63,1
Улатăр	19,5	26,4	25,8	4,5	—	19,0	52,9

Колхозпа тунă договора пурнăçламалла

ÇĔРПӲ, майăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти хăшпĕр колхозсенче трактор бригадисем ытла та япăх ĕçлеççĕ. Нумай тракторсем çураки ĕçĕсене тума пуçăннăранпа та лайăх ĕçлесе кăтартаймарĕç. МТС колхозсемпе тунă договорсем пурнăçланмасăр юлаççĕ. Çапла пулсан та Çĕрпӳ МТС руководителĕсем трактор бригадисене техника тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас ĕçе йĕркелеме тăрăшмаççĕ.

«Правда» колхозра ĕçлекен 7-мĕш трактор бригадине илĕпĕр. Вăçĕ тракторпа апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа майăн 11-мĕшне çитиччен пурĕ те 77 гектар кăна сухаланă. 49 гектар культиваци тунă, 50 гектар çине тырă акнă. Тракторсем тăтăшах ахаль тăнă пирки колхозра çураки ĕçĕ кая юлса пынишĕн бригадир Н. Егоров юлташ пăшăрханни сисĕнмест. Вăл тракторсене юсаса хăвăртрах ĕçе ярассишĕн тăрăшмасть, МТС механикĕсенчен пулăшу ыйтмасть, ĕçре хăшпĕр трактористсем брак тунипе те килĕшсе тăрать.

«ДТ-35» тракторпа çуракине тухнăранпа пурĕ те 15 гектар кăна сухаланă, пĕр гектар та акман. Культиваци тунă чухне 7 гектар çинче, сухаланă чухне 3 гектар çинче трактористсем çĕрĕçне япăх тунă. Япăх ĕçе колхоз правленийĕ йышăнма килĕшмен, ĕçе тӳрлетсе çĕнĕрен тума хушнă. Çакăн хыççăн трактора салатса пăрахнă та трактористсем 10 кун хушши ĕçлемен.

Колхоз правленийĕ, МТС договора пурнăçламасть пулин те, колхоз вăйĕсемпе çуракине хăвăртрах иртерме тăрăшмасть.

«Правда» колхоз халĕ ир акмалли культурăсене те акма тытăнманпа пĕрех. Сурхи тулă 65 гектар çине акмалла, пурĕ те 15 гектар кăна акнă. Сеяльщиксене тырă акмалли нормăсемпе паллаштарман, сеялкăсене тырă акмалли нормăна лартса паман. Çавна пула ĕç чарăнса тăрать. Сухаласа хатĕрленĕ 77 гектар çĕр пусăрăнса типсе пырать.

Колхозри партипе комсомол организацийĕсем çураки ĕçне организацилесе ертсе пырас енĕпе правление çителĕксĕр пулăшаççĕ.

С. ШАДИН.

Ăмăртса ĕçленипе

ШĂХАСАН. Анат Юнтапари Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем иртнĕ çул начар мар тырпул пухса илчĕç. Колхозниксем кăçал тата пысăкрах обязательствăсем илчĕç, кашни гектартан 17 центнертан кая мар тĕштырă туса илме сăмах пачĕç. Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳн малтанхи тапхăрĕнче — çуракинче тăрăшса ĕçлесе колхозниксем пысăк çитĕнӳ турĕç.

Колхоз ир акакан тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене 9 кун хушшинче, агротехника правилисене çирĕп пăхăнса акса пĕтерчĕ. Тырпула пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă, 51 гектар çине çурхи тулă хĕреслĕ майпа акса хăварнă. И. Михайлов, И. Ефимов, С. Данилов тата В. Иванов юлташсем куллен 5—6-шар гектар тырă акса пычĕç, нормăна тăтăшах иртерсе тултарчĕç.

Сухаçăсем хушшинче те социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ. 1-мĕш бригадăри В. Ананьев, 2-мĕш бригадăри Х. Павловпа Е. Павлова юлташсем нормăна 130—140 процент таран тултарса ĕçлерĕç. Вĕсем 15—17 сантиметр тарăнăш сухаларĕç.

Колхоз силос культурисемпе тымарçимĕçсем акмалли плана та иртерсе тултарчĕ, 10 гектар çине кантăр акрĕ.

Çуракинче кăçал МТС-ăн 13-мĕш трактор бригади (бригадирĕ И. Моисеев юлташ) тухăçлă ĕçлерĕ. А. Илларионовпа Д. Иванов трактористсем «ДТ-54» тракторпа кашни сменăри задание иртерсе тултарса пычĕç. Вĕсем 100 гектара яхăн тырă акса пачĕç.

Çапла колхоз çураки ĕçĕсене районта малта пыракан Куйбышев ячĕпе тăракан колхозпа пĕр вăхăтра вĕçлерĕ. Çак çитĕнĕве колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухнипе, уй-хирте ĕçлекенсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса янипе тата колхозăн мĕнпур резервĕсемпе анлăн усă курнипе тума пултарчĕ.

Халĕ колхозниксем çĕрулми лартма, ирхи çĕртме сухи тума тытăнчĕç. Колхоз çĕртме тумалли плана майăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Халлĕхе 40 гектар ирхи çĕртме тунă.

Г. ЛУЧ.
В. ВЕСЕЛОВ.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ТАТА ЫТТИ МАШИНĂСЕМПЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

1953 çулхи майăн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Мĕн пурĕ ĕçлени	Çуртрисем акни	МТС-сем	Мĕн пурĕ ĕçлени	Çуртрисем акни
Сурмайдан	20,5	48,5	Кувакино	11,1	38,6
Шупашкар	16,8	43,4	Муркаш	10,9	43,8
Улатăр	16,5	32,1	Первомайски	10,6	48,6
Шăмăршă	16,2	51,2	Йĕпреç	10,4	51,8
Чкаловски	15,7	52,3	Канаш	9,8	11,3
Пăрачкав	15,7	40,4	Чурачăк	9,6	53,8
Çĕрпӳ	14,1	31,2	Вăрмар	9,5	49,3
Ишлей	13,7	61,7	Шăхасан	9,1	41,2
Советски	13,1	51,9	Тăвай	9,1	34,4
Сĕнтĕрвăрри	12,8	50,2	Çĕмĕрле	9,0	26,5
Сĕнтĕр	12,2	38,2	Елчĕк	8,8	32,9
Калинино	11,8	43,1	Октябрьски	8,1	24,4
Куславкка	11,7	48,3	Сиява	7,8	13,5
Элĕк	11,4	32,1	Вăрнар	7,6	23,2
Комсомольски	11,4	56,7	Красноармейски	7,1	23,4
Хĕрлĕ Чутай	11,2	32,8	Етĕрне	5,4	16,0

Тăван çĕршывра

Мускаври Серго Орджоникидзе ячĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри технологи лабораторийĕн коллективĕ металран тунă япаласен çиелти сийне тикĕс якатма май тупнă. Метала сарлака резецсемпе кастарса якатаççĕ. Вара япалан çиелти сийĕ питĕ лайăх тикĕсленет, ĕç 10—15 хут хăвăртрах пулать. Заводри строгальщиксем пурте çĕнĕ майпа ĕçлеççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): технологи лабораторийĕн инженерĕ Д. Н. Голосов, цех начальникĕн заместителĕ В. М. Шуваев тата строгальщик В. И. Ямпольский металран тунă япалан çиелти сийĕ мĕн пек тикĕс якалнине тĕрĕслеççĕ.

Н. СИТНИКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет Çарĕн тĕп музейĕнче

Совет Çарĕн Мускаври тĕп музейĕнче СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсен мухтавлă ĕçĕсене кăтартакан документсем нумай.

Музейри Ялавсен залĕнче орден ленттисемпе тыттарнă хĕрлĕ ялавсем пур. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Çарĕн паттăр полкĕсемпе дивизийĕсем çак ялавсем айĕнче çапăçса Германи империализмне çĕнтернĕ.

Зал варринче Генералиссимус И. В. Сталин юлташăн скульптурăлла пысăк портречĕ.

Музейри материалсем Аслă Отечественнăй вăрçăн тĕп тапхăрĕсем, совет полководецĕсем, халăх геройĕсем çинчен, капитан Гастелло, Александр Матросов, панфиловецсем, Краснодон çамрăкĕсем çинчен каласа параççĕ.

Стендсем çинче — пульăсем шăтарнă ялавсем, снайперсен винтовкисем, танксен, самолетсен, карапсен макечĕсем. Экспонатсем хушшинче çавăн пекех тата пульăпа шăтарнă «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» кĕнеке, парти билечĕсем нумай. Вĕсем çинче Тăван çĕршывăн чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ воинсен юнĕ курăнать.

Совет Çарне пĕтĕм тĕнчери халăх чĕререн юрататъ. Музейре Совет Çарне ирĕке тухнă халăхсем панă парнесем те нумай. Венгрири ĕçсыннисем музее Совет Çарĕсем Будапешт хулине ирĕке кăларнă ятпа туса лартнă памятник макетне ярса панă. Совет Çарне чысласа çакăн пек памятниксем Хĕвеланăç Европăри нумай хуласенче туса лартнă.

Пĕр барельеф çине И. В. Сталинпа Мао Цзэ-дун сăнĕсене ӳкернĕ. Ку вăл—Китай халăхĕ Совет Çарне ярса панă парне.

Çак кунсенче музее Совет Çарĕн воинĕсем, Мускаври предприятисенче ĕçлекен рабочисем, студентсем йышлăн пыраççĕ. Вĕсем музейри документсемпе паллашаççĕ. (ТАСС).

Çĕршыври уй-хирсенче

КРАСНОДАР. Кубаньре табак лартма тытăннă. Крым, Лаба, Анапа районĕсенче, çавăн пекех табак лартса тăвакан ытти районсенче те çак ĕçе пĕтĕмпе тенĕ пекех механизацилесе çитернĕ. Плантацисенче табак калчи лартакан машинăсем иртнĕ çулхинчен икĕ хут нумайрах ĕçлеççĕ.

ЧКАЛОВ. Уй-хирсенче калчасем питĕ лайăх шăтса тухнă. Çураки ĕçĕ кунран-кун вăйланать. Колхозсем малта пыракан техникăпа усă курса çуракине хăвăртлатаççĕ, тулă ытларах акаççĕ, курăк акмалли плана иртерсе тултараççĕ. Чылай колхозсем ирхи çĕртме туса пĕтернĕ.

АСТРАХАНЬ. Камызяк, Красноярск тата ытти районсенче рис акма тытăннă. Рис плантацийĕсем Атăлпа Ахтуба хушшинчи айлăмра. Кăçал иртнĕ çулхинчен 1.000 гектар ытларах рис акса хăвараççĕ.

Майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС).

СССР Наука академийĕн чĕлхе вĕрентĕвĕн институтĕнче

Майăн 11-мĕшĕнче СССР Наука академийĕн чĕлхе вĕрентĕвĕн институтĕнче диалектологи канашлăвĕ уçăлнă. Канашлăва Мускаври, Ленинградри, Киеври, Минскри, Иркутскри, Томскри, Саратоври, Алма-Атари тата ытти хуласенчи наукăпа тĕпчев институчĕсен, университетсен, педагогика институчĕсен представителĕсем хутшăннă. Канашлу вырăс халăх сăмахĕсен атласне тăвас ĕçе сӳтсе явма, çавăн пекех тата совет диалектологийĕн пĕтĕмĕшлĕ теорилле ыйтăвĕсене сӳтсе явма пухăннă.

Канашлу майăн 15-мĕшĕччен ĕçлет.

(ТАСС).

Россия Федерацийĕнчи курортсенче

РСФСР Сывлăх министерстви аллинче 36 курорт шутланать. Уралти «Сергиевские минеральные воды» текен санатори шывĕ Мацестăри шывпа тан шутланать. Алтай крайĕнчи «Белокуриха» санатори Цхалтубо курорчĕпе танлашать. Старая Руссăпа Липецкри курортсем те тивĕçлипе мухтава тухнă.

Калинин облаçĕнчи Кашино курортĕнче иртнĕ çул 20-мĕш номерлĕ Ессентуки шывĕпе танлашакан шыв тупнă. Ку шыв вар-хырăм чирĕнчен усăллă.

Россия Федерацийĕнче санаторисем тата вырăнсенчи органсене пăхăнса тăракан курортсем çĕршер шутланаççĕ. Çĕпĕрпе Уралта та, Крымпа Çурçĕр Кавказра та, Архангельскпа Вологда облаçĕсенче те, Коми республикинче те тата ытти вырăнсенче те курортсем пур.

Кăçалхи сезона хатĕрленес тĕлĕшпе пур çĕрте те пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Курортсене тĕпрен юсама тата çĕнĕ йышши медицина оборудованийĕпе пуянлатма укçа-тенкĕ нумай уйăрса панă.

Хальхи вăхăтра Пĕтĕм Россиăри курортсен иккĕмĕш смотрĕн итогĕсене туса пĕтернĕ. Малти вырăна республикăри 10 санатори тухнă. Вĕсем хушшинче: «Сергиевские минеральные воды», «Нальчик», «Эйск», «Пионерск» (Калининград облаçĕ) тата ыттисем те (ТАСС).

КАСПИ ТИНĔСНЕ

ДОН çинчи РОСТОВ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян 15 сехетре Ростов портĕнчен «Карадаг» танкер тухса кайнă. Нефть турттаракан çав танкер, капитан И. Ефимчук ертсе пынипе, Балтика тинĕсĕнчи Вентспилс портĕнчен тухса Европăпа Африка сыранĕсем хĕррипе пырса, Хура тинĕспе Азов тинĕсĕ урлă каçса, Дон çинчи Ростова пырса çитнĕ.

Паян «Карадаг» Дон шывĕ тăрăх Цимлянски тинĕс патне тухса кайнă. Вăл Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан канал тăрăх пырса Атăл çине тухать те, Баку хулине кайма çул тытать.

Планран иртерсе

ПЯРНУ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Киров ячĕпе тăракан колхозри О. Хауг ертсе пыракан пулăçсен бригади пĕр кунта 10 тонна салака тытнă. Бригада нормăна 6 хут иртерсе тултарнă.

Эстонири ытти колхозсенчи пулă тытакан бригадăсем те ăнăçлă ĕçлеççĕ. Государствăна планран иртерсе 700 тонна пулă панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çĕмĕрле райкомĕ политикăлла агитацие хакламасть

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ совет халăхне коммунизмăн кĕрешмелли программăпа хĕçпăшаллантараççĕ. Çак программăна ăнăçлă пурнăçлама ĕçсыннисен ăнланулăхне тата политикăлла активлăхне куллен ӳстерсе пымалла. Ку ĕçре уйрăмах политикăлла агитаци пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Политикăлла агитаци ĕçсыннисен пĕрлĕхне çирĕплетет, партипе массăсем хушшинчи çыхăнăва вăйлатать. Çак пархатарлă ĕçе тума пирĕн Коммунистсен партине агитаторсен нумай пинлĕ çарĕ пулăшса пырать. Вĕсем коммунизм идейине, Коммунистсен партийĕн тулашри тата шалти политикине халăх хушшинче ăнлантараççĕ, социализмлă çĕршыва тата ытларах юратма, ăна çирĕплетессишĕн, унăн хăй-хăватне ӳстерессишĕн кĕрешме вĕрентеççĕ, халăхсен политикăлла сыхлăхне ӳстереççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ агитаторсене куллен вĕрентсе, вĕсене ĕçре пулăшса пырас пулать. Агитаторсене мĕнле ертсе пымаллине партин Центральнăй Комитечĕ «Сталинград парторганизацинчи агитаторсемпе ĕçлес ĕçри çитменлĕхсем тата ăна лайăхлатмалли майсем çинчен» 1947 çулта йышăннă постановленире тĕплĕн кăтартса панă.

Анчах Çĕмĕрле районĕнчи парторганизацинче çак постановление пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. КПСС райкомĕ агитаторсене пуçламăш парторганизацисем ертсе пырасса шаннă. Агитаторсен районти пухăвĕсене икĕ уйăхра пĕрре ирттерес вырăнне çулталăкра пĕр хут çеç ирттернĕ. Çавăн пекех кустсенчи, подрайонсенчи агитаторсен канашлăвĕсемпе семинарĕсене уйăхра пĕр хутран кая мар ирттерес вырăнне хутран-ситрен çеç пухнă. Райком вĕсене те пулин васкавлăн, тĕплĕн хатĕрленмесĕр ирттерет. Семинар ирттермелли плансене бюро ларăвĕсенче сӳтсе явмаççĕ. Çавăн пирки семинарсен идейăлла-политикăлла шайĕ çӳлĕ пусăмра тăмасть, вĕсем агитаторсене çителĕклĕ пулăшу параймаççĕ. Унта агитаторсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ кăна çӳрет.

Райком агитколлектив руководителĕсене ертсе пымасть, вĕсен семинарĕсене ирттермест. Юлашки 17 уйăх хушшинче колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсене икĕ хут, промышленность предприятийĕсенчи парторганизаци секретарĕсене виçĕ хут, учрежденисемпе шкулсенчи парторганизаци секретарĕсене икĕ хут çеç пухнă. Çак семинарсенче массăлла-политикăлла ĕçе ертсе пырасси çинчен пĕр ыйту та сӳтсе явман.

Çавăнпа та чылай парторганизаци секретарĕсем агитаторсене камăн ертсе пымаллине те пĕлмеççĕ. «14 лет Октября», «Хĕрлĕ Октябрь», «Хĕрлĕ сухаçă», «Большевик» колхозсенче агитколлективсене парторганизаци секретарĕсем ертсе пымаççĕ, ку ĕçе рядовой коммунистсене хушнă. Районти çыхăну кантурĕнчи парторганизаци секретарĕ Антонов юлташ агитколлектива ертсе пыма парти ретĕнче тăман çынна шанса панă.

Районта агитаторсен пĕлĕвĕсене ӳстерес ĕçре те çитменлĕхсем нумай. 1.294 агитатортан 400-шĕ пĕр çул е икĕ çул çеç ĕçлеççĕ. Вĕсен умне пĕлмен ыйтусем нумай тухса тăма пултараççĕ, анчах парти райкомĕпе пуçламăш организацийĕсем вĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозри парторганизацинче 13 агитатор, «Маяăн 1-мĕшĕ» колхозра 8 агитатор хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе нисăта та вĕренмеççĕ, вĕсемпе семинарсем те ирттермеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан, «Çĕнтерӳ кунĕ», «Комбинат» колхозсенчи парторганизацисенче семинарсене сайра-хутра çеç пухаççĕ. «Малалла», «Большевик» колхозсенчи парторганизаци секретарĕсем агитаторсене пухса каламаççĕ. Районти нумай агитаторсем хаçат-журнал çырăнса илмеççĕ. «Маяăн 1-мĕшĕ» колхозри 25 агитатортан 15-шĕ пĕр хаçат та илсе тăмаççĕ.

Районти чылай пуçламăш парторганизацисем массăлла-политикăлла ĕçе хакламаççĕ, агитколлективсене çителĕклĕ ертсе пымаççĕ. Парти пухăвĕсенче массăлла-политикăлла ĕçĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явмаççĕ. «Большевик» заводри, чугун çул станцинчи, «Консервлес» мехлеспунктĕнчи, çыхăну кантурĕнчи, районти больницăри, «Искра», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисем пĕлтĕр тата кăçалхи 4 уйăх хушшинче массăлла-политикăлла ĕçĕн ыйтăвĕсене пĕрре те сӳтсе явман. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизацин кăçалхи январĕн 30-мĕшĕнче пулнă пухăвĕнче «тĕрлĕрен» ыйту лартнă та, «агитаторсене çирĕплетес» тенĕ. Хушамачĕсене çырнă та ĕçе пĕтернĕ, анчах ăста çирĕплетни паллă мар. Çавна пула унти агитаторсен ĕçĕ япăх пырать.

Районта массăлла-политикăлла ĕçе кампаниллĕ тăвасси пĕтмен-ха. Вырăнти Советсене суйлана хыççăн, нумай пуçламăш организацисем массăлла-политикăлла ĕçе чарса лартнă. Сăмахран, «Хĕрлĕ сухаçă» колхозри Е. Маскина агитатор, «Маяăн 1-мĕшĕ» колхозри Толстовпа Кузьмин агитаторсем суйлава ирттернĕренпе хăйсен участокĕсене кайса та курман.

Пуçламăш парторганизацисем агитколлективсен ĕç планĕсене парти пухăвĕсенче çирĕплетмеççĕ, çавăнпа та агитаторсем мĕнле темăсемпе калаçу ирттермеллине пĕлмеççĕ. «14 лет Октября» колхозри çамрăк агитатор Лапушкина юлташ хăйĕн участокĕнче çитес кунсенче калаçу ирттерме тема та тупаймасть, колхозниксене пĕчĕк-пĕчĕк статьясем çеç вулакаласа парать.

Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем агитаторсене суйласа илсе çирĕплетес ĕçе çителĕклĕ хак памаççĕ. Агитатор пулма çыннăн политикăлла пĕлӳлĕхĕпе пултарулăхне пăхмасăрах уйăрса лартаççĕ, çавна пула вара чылай участоксенче агитацилле ĕç вăйсăрланса каять. Молотов ячĕпе тăракан, «Маяăн 1-мĕшĕ» колхозсенчи парторганизацисем агитаторсен шутне сахал вĕреннĕ, хăйсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлемен, пачах хаçат-журнал вуламан çынсене кĕртнĕ.

Парти райкомĕ бюро ларăвĕсенче агитколлективсен отчечĕсене час-часах итлет, анчах хăйĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмест. Сăмахран, çулталăк каярах индпошив мастерскойĕпе «Партизан» артельти парторганизацисем стена хаçачĕсене мĕнле ертсе пыни çинчен итленĕ. Индпошив мастерскойĕнчи парторганизаци райком бюровĕн решенине паянхи кун та пурнăçламасть. Стена хаçачĕ унта сайра хутра çеç тухать. Иртнĕ çулхи июньре райком бюровĕ Свердлов ячĕпе тăракан колхозри агитколлектив ĕçĕ çинчен сӳтсе явнă, анчах ку агитколлектив халĕ те япăх ĕçлет.

Райком агитаторсене хăйĕн библиотеки урлă пысăк пулăшу пама пултарать. Ку библиотекăн культурăпа сутăç учрежденийĕсемшĕн кăтартуллă, пусарулла учреждени пулмалла. Унăн агитаторсене куллен методикăлла кăтартусем парса пулăшмалла. Анчах унта кĕнекесен витринисем те, калаçу темисем те, агитаторсен паха опычĕпе паллаштаракан материалсем те çук.

Массăлла-политикăлла ĕçре райкомăн штатра тăман докладчиксен ушкăнĕ пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Парти райкомĕ çак ушкăна апрелĕн 17-мĕшĕнче çеç çирĕплетсе хăварнă. Вăл докладчиксене те çителĕклĕ ертсе пымасть, вĕсен семинарĕсене ирттермест, вĕсем валли инструкциллĕ докладсем сайра хутра çеç пулаççĕ.

Массăлла-политикăлла ĕçе ертсе пырас тĕлĕшпе райком хăйĕн хаçачĕпе усă курмасть. Районти «Социализмла ĕç» хаçат ку ĕçĕн ыйтăвĕсене çителĕклĕ çутатса пымасть. Иртнĕ çул пĕр умстатья тата икĕ информаци çеç пичетленĕ. Кăçал та çавнашкалах. Лайăх ĕçлекен агитколлективсен паха опытне райком та, хаçат та сармаççĕ.

«Идеологилле ĕç партин чи пысăк обязанноçĕ пулса тăрать, — терĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче,—ку ĕçе хакламанни партипе государство интересĕсене питех те пысăк сиен кӳме пултарать. Социализмла идеологи влиянийĕ вăйсăрланни яланах буржуалла идеологин влиянийĕ вăйланнине пĕлтерет,—çакна пирĕн кирек хăçан та асра тытас пулать».

Политикăлла агитацие çителĕксĕр ертсе пыни идеологилле ĕç çинчен манса кайни, ăна хакламанни пулать.

Партин Çĕмĕрле райкомĕн агитаторсене ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла. Политикăлла агитацие хакламаннине хăвăртрах пĕтермелле.

А. АНТОНОВА.

Горький хулинчи партшкулта

Горький хулинче партшкул уçăлнăранпа çичĕ çул çитрĕ. Шкултан темиçе çĕр çын вĕренсе тухнă. Ку шутра Чăваш республикинчен яйнисем 150 çынна яхăн.

Кăçал та пирĕн республикăри партипе совет тата комсомолăн ертсе пыракан органĕсенче ĕçлеме ку шкултан вĕренсе тухнă юлташсен çĕнĕ ушкăнĕ килет.

Икĕ çул хушшинче шкулта вĕренекенсем марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланаççĕ. Хулари пуçламăш парторганизацисенче, çывăхри колхозсенче, фабрикăсемпе заводсенче пулса, вĕсен ĕç опытне вĕренеççĕ. Вĕренекенсем чылайăшĕ агитаторсем, штатра тăман консультантсем, пропагандистсем пулса ĕçлеççĕ.

Хальхи вăхăтра вĕренекенсем курссене вĕренсе пĕтермелли экзаменсене тата государство экзаменĕсене тытма хатĕрленеççĕ.

М. ПЕТРОВ.

Кино кăтартасси çинчен

КАЛИНИНО. КПСС райкомĕн бюровĕ районти кинофикаци пайĕн отчетне сӳтсе яврĕ.

Кинофикаци пайĕ пĕрремĕш квартал планне киносеанссем тăрăх 77,1 процент, кино курма çӳрекенсем хисепĕпе—49,3 процент, укçа-тенкĕ пухассипе 41,6 процент çеç тултарнă.

Çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕ механиксенпе мотористсене суйласа илес, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарас тата воспитани парас ĕçе куллен туса пыманнинче пулать. Иртнĕ çулта çичĕ механикран тăваттăшĕ, çичĕ мотористран улттăшĕ улшăннă. Кăçалхи виçĕ уйăх хушшинче те виçĕ çын улшăннă.

Кинофикаци пайĕ çынсене тĕрĕслемесĕрех ĕçе илнĕ тата вĕсен ĕçне тишкерсе пыман. Сăмахран, Александров гражданина механик ĕçне илнĕ. Вăл ĕçе ӳркенсе тунă, кино кăтартнăшăн пухăннă укçана хăйĕн кĕсйине чиксе пурăннă. Унăн передвижки пĕрмай ĕçлемесĕр ларнă. Çавăнпа Александрова вырăнтан кăлармалла пулнă.

Механиксем çитменнине пула хăшпĕр передвижкăсем уйăхĕ-уйăхĕпе ĕçлемесĕр ларнă. Январь тата март уйăхĕсенче 9 передвижкăран улттăшĕ, февральте çиччĕшĕ çеç ĕçленĕ. Кинофикаци пайĕ çамрăксене механиксен шкулĕсене вĕренме çителĕклĕ ярса тăман. Иртнĕ çулта вĕренме районтан виçĕ çын çеç яннă. Кăçал пĕр çын та яман.

Механиксемпе мотористсен пухăвĕсем, канашлăвĕсем сайра хутра çеç пулса иртнĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тата Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ тăрăх лекцисемпе докладсем туса паман, политинформацисем ирттермен.

Хăшпĕр механиксем хăйсен ĕçĕшĕн ответлăх туймаççĕ. Вĕсен ĕçре дисциплина та çук. Орехов механик февральте ултă сеанс çеç туса ирттернĕ, П. Никитин — виçĕ сеанс. Çирĕплетнĕ маршрутсене часчасах пăсаççĕ. Çавна пула хăшпĕр ялсенче кино сайра хутра çеç пулать.

Идеологи ĕçĕнче кино мĕн тери пысăк вырăн йышăннине хăшпĕр пуçламăш парторганизаци секретарĕсем халичченех ăнланса çитмен.

ВЛКСМ райкомĕ, культурăпа сутăç учрежденийĕсен пайĕ те кино кăтартас ĕçе лайăхлатассинчен пăрăнса тăраççĕ. ВЛКСМ райкомĕ уйăрса лартнă кинооргнизаторсем тата культурăпа сутăç работникĕсем кинофикаци пайĕн работникĕсене çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Курнă фильмсем çинчен ăнлантарса памаççĕ. Сеанссем умĕн докладсем, лекцисем, калаçусем ирттерни çук. Кино çинчен районти хаçат та çырмасть.

Райсовет исполкомĕ кинофикаци пайĕн ĕçĕсем çине çителĕклĕ пăхмасть, унăн ĕçĕсене тĕрĕслесе пымасть. Кино кăтартас ĕçе лайăхлатма кирлĕ таран пулăшу памасть. Иртнĕ çулта тата кăçалхи çулăн виçĕ уйăхĕнче райсовет исполкомĕн ларăвĕнче кинофикаци пайĕн отчетне пĕрре те итлемен.

Райком бюровĕ кино кăтартас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăннă. Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене киноработниксене куллен пулăшма хушнă. ВЛКСМ райкомне, культурăпа сутăç учрежденийĕсен пайне лекцисем, докладсем, калаçусем, курнă фильмсем тăрăх конференцисем ирттерме кирлине кăтартса панă.

Лекцилле пропагандăна ертсе пырас пулать

Çак кунсенче Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан обществăн Чăваш республикинчи уйрăмĕн Шупашкар хулинче пурăнакан членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура правлени членĕ Л. Михайлов юлташ Шупашкар хулинче лекцисем ирттерес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Докладчик партин XIX-мĕш съезчĕ хыççăн лекцилле пропаганда ĕçĕнче И. В. Сталинăн «ССР-Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕпе парти съезчĕн материалĕсем тăрăх ирттернĕ лекцисем пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртрĕ. И. В. Сталинăн чаплă произведенийĕпе ĕçсыннисене тĕплĕн паллаштарас тесе, Обществăн Чăваш республикинчи уйрăмĕ Шупашкар хулинче 17 тема тăрăх лекцисем ирттернĕ, кашни темăпа 12-шер лекци вуланă.

Лекцисем ирттерес ĕçе Г. Германов, Я. Железнов, М. Григорьев, А. Плетнев, Л. Пельцих, В. Егоров, А. Тарчевский, Д. Сикстель, Б. Бройтман, Г. Чавка юлташсем активлă хутшăнаççĕ, вĕсем нумай лекцисем вулаççĕ.

Анчах та Обществăн Чăваш республикинчи уйрăмĕн правленийĕ хăйĕн членĕсене лекцилле пропаганда ĕçне пурне те явăçтарайман-ха, секцисем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ, лекцисене сӳтсе явма сайра хутра анчах пухăнаççĕ. 1952 çулта хулари 260 члентан 132 член кăна лекцисем вулас ĕçе хутшăннă.

Л. Михайлов юлташ доклачĕ тăрăх пренире чи малтан Николаев лектор (пединститут) тухса каларĕ. Вăл Обществăн Чăваш республикинчи уйрăмне чăвашла лекцисем ирттерменнишĕн критиклерĕ, ку йăнăша тӳрлетме сĕнчĕ. Ялсене тухса каякан лекторсем хăйсен лекцийĕсене ытларах чăвашла вулама тăрăшмалла, çапла туни вăл лекцилле пропагандăна халăх хушшинче анлăрах сарма пулăшĕччĕ, пирĕн лекцисене халăх массисем пур енчен те лайăх ăнланса илĕччĕç.

Общество членĕ Судаков юлташ советпа хуçалăх организацийĕсен руководителĕсен лекцилле пропаганда çине тимлĕн пăхма кирли çинчен чарăнса тăчĕ. Анчах та хăшпĕр руководительсем общество членĕсене лекцисем ирттерес ĕçе анлăн явăçтарас вырăнне, çав ĕçе чарса тăма хăтланаççĕ.

— Лекцисен идейăлла-политикăлла шайĕ,—терĕ экономикăлла наукăсен кандидачĕ Лебедев юлташ,—лекторсене лайăх суйласа илнинчен тата лекцисене секцисенче сӳтсе явнинчен килет. Кунсăр пуçне, лекцисен пахалăхне аудиторире те контроллес пулать.

Ĕçсыннисем И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçне тĕплĕн те тарăн вĕренме тăрăшаççĕ, ку произведенипе хытă интересленеççĕ. Çакна шута илсе, Лебедев юлташ И. В. Сталинăн произведенийĕ тăрăх лекцисем ытларах ирттерме тата ку ĕçе Госпланри ответлă юлташсене хутшăнтарма сĕнет.

Биологи наукисен докторĕ Плетнев юлташ аслă Мичуринпа Павловăн вĕрентĕвĕсене халăх хушшинче анлăн сарасси çинчен чарăнса тăрать. Вăл Общество уйрăмне республикăри институтсемпе, вĕсенчи наукăлла вăйсемпе таччăнрах çыхăнса ĕçleме сĕнет, лекцисене лайăх хатĕрлеме, лайăх вулама, çак майпа Общество авторитетне çӳлерех çĕклеме чĕнсе калать.

Агроном Никитин юлташ Обществăн республикăри уйрăмне тата республикăри хаçатсене агрономи наукин юлашки çитĕнӳвĕсене япăх çутатса пынишĕн критиклерĕ.

— Общество уйрăмĕн правленийĕн,— терĕ вăл,—лекцилле пропагандăна тĕпренех лайăхлатмалла, ăна ертсе пымалла, хамăр республикăри практикăлла ĕçсемпе таччăн çыхăнтармалла, лекторсен хастарлăхĕпе пултарулăхне ӳстермелле.

Пухура пулнисене Краеведени музейĕн сотрудникĕ Волков юлташ тухса калаçни тĕлĕнтерчĕ. Вăл Общество членĕсене тахçан авал пулса иртнĕ «Чăваш çĕршывĕнчи третичнăй тапхăр çинчен...» пĕр лекци те вуламаççĕ тесе ӳпкелешсе каларĕ. Çав вăхăтрах Волков юлташ хамăр республикăра, Ленинпа Сталин партийĕ ертсе пынипе, мĕн тери пысăк улшăнусем пулса иртнине Краеведени музейĕ мĕнле кăтартса пани çинчен пĕр сăмах та шарламарĕ.

Пуху лекцилле пропаганда ĕçне лайăхлатасси çинчен тивĕçлĕ решени йышăнчĕ тата, вăрттăн сасăласа, Общество членĕсен республикăри конференцине кайма 35 делегат суйларĕ.

Çакна та каласа хăварас пулать: Общество уйрăмĕн правленийĕ пухăва начар хатĕрленнĕ, çавăнпа та вăл начар иртрĕ. Правлени Общество членĕсем ăçта тата мĕн ĕçленине те пĕлмест. Çакă уйрăммăнах конференци делегачĕсене суйланă чухне палăрчĕ. Общество членĕсем пурте йĕркеллĕ пухăнман пирки, конференци хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ туса пыраймарĕ. Çак çитменлĕхсем вĕсем Пĕтĕм Союзри обществăн политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш республикинчи уйрăмĕнче çирĕп йĕрке çукки çинчен калаççĕ.

Правительство наградисене пани

Çак кунсенче Шупашкарта, Советсен çуртĕнче, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе Совет Союзĕн медалĕсене панă.

Нумай вăхăт лайăх ĕçленĕшĕн М. А. Мартынов юлташа «Ĕçре палăрнăшăн» медаль панă. Государство банкĕн Сĕнтĕрвăрринчи уйрăмĕнче аслă бухгалтер пулса ĕçлекен И. Л. Матвеевскине, Государство банкĕн Куславккари уйрăмĕн управляющине П. И. Остроумова, Государство банкĕн Çĕрпӳри уйрăмĕн аслă кассирне С. А. Немилова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи финанс пайĕн инспекторне М. З. Хлебникова тата ыттисене те «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль панă.

Октябрьски районĕнчи финанс пайĕн аслă инспекторĕ В. А. Алексеева, Госстрахăн Куславкка районĕнчи аслă бухгалтерĕ Л. П. Белоусов тата ыттисем те «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Октябрьски районĕнчи Кутемерти çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница А. С. Андреева «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль, Çĕрпӳ районĕнчи Хĕрлĕтури çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница Е. П. Петрова, Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкул учительници М. С. Петрова тата Октябрьски районĕнчи Çичĕпӳртри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительница А. П. Садовникова «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Награда илме тивĕçлĕ пулнисене З. А. Андреева юлташ саламласа малашнехи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă суннă.

Тăпран сухалакан сийне тарăнлатасси

Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра аталантарма панă директивăсенче çапла кăтартса панă: çĕрĕçĕ тата та тухăçлăрах, квалификациллĕрех пулмалла, курăксем ытларах акса тумалла, тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем туса çитермелле, тенĕ.

Яланах пысăк тухăçлă тырпул туса илме çĕре лайăх, тарăн сухаласа çемçетни кирлĕ. Çавăн пек ĕçлени усăллине опытсем тăвакан учрежденисен тата малта пыракан колхозсен практики аван çирĕплетсе парать. Тăпран сухалакан сийĕ мĕн чухлĕ тарăнтарах, унта çавăн чухлĕ ытларах нӳрĕ тата сывлăш пулать. Ун пек тăпрара ӳсентăран тымарĕсем шала ӳсе кĕреççĕ, ӳсентăрана апат хатĕрлесе паракан микроорганизмсем лайăх ĕрчеççĕ. Кунсăр пуçне тăпрана тарăн сухалани çумкурăксемпе кĕрешмелли тĕп май пулса тăрать. Кĕл тăприне тарăн сухаласан тата унта удобренисем çителĕклĕ тарăн кăларса тăрсан, унăн тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳсет.

Социализмла ялхуçалăхĕн питĕ кирлĕ задачисенчен пĕри тăпран сухалакан сийне тарăнлатасси пулать. Ку вăл çеремлĕ кĕл тăприсем çинче уйрăмах кирлĕ. Çавăн пек тăпрасем çинче, агротехникăн ытти кăтартăвĕсене пурнăçласа пынипе пĕрлех, тарăн сухаласан кăна вăйлă тырпул туса илме пулать.

Хура тăпраллă мар тăрăхри наукăпа тĕпчев институчĕ кăтартса панинчен çакă курăнать: кăллăрех тăмлă йывăр тăпрана 14—16 сантиметртан 18—20 сантиметра çити тарăнлатсан малтан акнă культура—кĕрхи тулă тухăçлăхĕ 9 процент, ун хыççăн акнă сĕлĕ тухăçлăхĕ 24 процент ӳснĕ; виççĕмĕш культура—хутăпăрса акнă клеверпа тимофеевка тухăçлăхĕ, тăпра сийне тарăнлатман участокрипе танлаштарсан, 50 процент ӳснĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи малта пыракан колхозсен опычĕ те çавăн çинченех калать. Тăпран сухалакан сийне 20—25 сантиметр чухлĕ тарăнлатма вăйлă нумай кирлĕ мар. Ку тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз опычĕ питĕ кăтартуллă. Колхоз çĕрĕсем хура-кăвак тата кăвак хăйăрлă тăм тăпрасем шутланаççĕ. Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ яланах вăйлă тырпул туса илет. Колхоз курăксем акмалли пусă çаврăнăшĕсене тĕрĕс йĕркелесе çитернĕ, удобренисемпе анлăн усă курать. Çакăнпа пĕрлех юлашки çулсенче кунта тăпран сухалакан тăпра сийне нумай тарăнлатнă. Тăпрана тарăн сухалама тытăннă хыççăн тырпул, уйрăмах çурхи тулă тухăçлăхĕ татах та ӳснĕ. Сăмахран, 1944—1946 çулсенче, 18—20 сантиметр тарăнăш сухаланă чухне, çурхи тулă тухăçлăхĕ гектар пуçне 14 центнер пулнă. 1947—1948 çулсенче, тăпрана 20—25 сантиметр сухаласа акнă хыççăн, кашни гектартан 26,1 центнер çурхи тулă пухса кĕртнĕ. 1949 çултан тытăнса колхоз тăпрана 30—32 сантиметр тарăнăш сухалама пуçланă. Виçĕ çул хушшинче вара вăтам шутпа кашни гектартан 33,7 центнер çурхи тулă туса илнĕ. 1952 çулта колхоз гектар пуçне 41,32 центнер çурхи тулă пухса кĕртнĕ.

Тăпран сухалакан сийне тарăнлатни пысăк усă кӳнине республикăри ытти колхозсенчи тĕслĕхсем те витĕмлĕн çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз тăпран сухалакан сийне тарăнлатиччен 1940 çулта кашни гектартан 12,4 центнер çурхи тулă туса илнĕ. Тăпран сухалакан сийне тарăнлатнă хыççăн тата удобренисемпе лайăх усă курса 1952 çулта çурхи тулă тухăçлăхне гектар пуçне 23,75 центнера çитернĕ, тымарçимĕçсем вара 500-шер центнер туса илнĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тăпрана тарăн сухалама тытăниччен гектартан тĕштырăсем 12—14 центнертан ытла туса илеймен. Тарăн сухаласа тăпрана удобренисемпе лайăхлатнă хыççăн 1952 çулта кашни гектартан 20,5 центнер тĕштырăсем пухса кĕртнĕ.

Тăпран сухалакан сийне тарăнлатас енĕпе хăшпĕр çитĕнӳсем тунă пулсан та нумай колхозсенче халĕ те ăшăх сухалаççĕ-ха, ӳсентăрана аталанма кирлĕ чухлĕ те (20—22 сантиметр тарăнăш) сухаламаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах республикăн çурçĕр енчи районсене палăртмалла.

Тăпран сухалакан сийне тарăнлатмалли тĕп май предплужниклă плугпа ĕçлесси пулать. Кун пек чухне, тăпран уйрăмлăхне кура, аялтан сиеле 4—5 е 2—3 сантиметр хулăмăш кĕл тăпри кăларса пыраççĕ. Сиеле тухса пыракан кĕл тăпри ӳсентăраншăн сиенлĕ пулнине манмалла мар. Çĕнĕрен тăвакан тăпрана лайăхлатас пулать. Çакна чи малтан çуя вырăнти тата минераллă удобренисем тăкнипе пурнăçлаççĕ. Тăпран сухалакан сийне тарăнлатас ĕçре хăш вăхăтра тарăн сухалани пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Тарăн сухаламалли чи лайăх вырăн тесе сĕртме пуссине шутламалла. Хура сĕртме тата пĕр-пĕр культура акнă сĕртме пуссине кĕркунне, ирхи сĕртме пуссине çуркунне сухаласа тарăнлатаççĕ.

Республикăри малта пыракан колхозсем тăпран сухалакан сийне агротехникăн мĕнпур комплексне пурнăçласа тарăнлатаççĕ. Вĕсем хире тислĕк, тислĕкпе торфран тунă компост тата минераллă удобренисем кирлĕ чухлĕ кăлараççĕ. Тăпра йӳçĕкне пĕтерме, известпе, фосфоритпа усă кураççĕ. Нумай çул ӳсекен пăрçа йышши курăксене пучахлă курăксемпе хутăштарса акаççĕ.

Тăпра сийне тарăнлатнă чухне кашни гектар çине вырăнти удобренисем çакăн чухлĕ кăлармалла: тислĕк—25—30 тонна, тислĕкпе торфран тунă компост—20—25 тонна. Кăтартнă удобренисем хуçалăхра çителĕксĕр пулсан, симĕс удобренипе усă курмалла. Ку енĕпе республикăри колхозсен кĕл тăприсем çинче люпин ытларах акса тума тытăнмалла.

Чăваш ялхуçалăх институчĕн тата Сĕнтĕр районĕнчи «Новая Юнга» колхозăн опычĕсем çакна çирĕплетсе панă: люпин вăйлă çитĕнсен тата ăна чечекеларнă вăхăтра удобрени тума сухаласа пăрахсан, çеремлĕ кĕл тăприсем çинче тĕштырăсен тухăçлăхĕ гектар пуçне 3,5—5 центнер таран ӳсет. Тырпул тухăçлăхне çавăн чухлĕ ӳстерме гектар çине мĕн пурĕ те 2 центнер люпин вăрлăхĕ çеç акмалла.

Кунта Шупашкар районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсем тĕлĕшпе туса ирттернĕ опытсене илсе кăтартни вырăнлă. Колхоз çĕрĕ кĕллĕрех тăпраллă. Тăпран сухалакан сийне тарăнлатиччен колхоз гектартан 18 центнертан ытла ыраш туса илеймен. 20—22 сантиметр тарăнăш сухалама пуçласан, ыраш тухăçлăхĕ гектар пуçне 23 центнер пулнă, 24—26 сантиметр тарăнăш сухалама пуçласан тата 40-шер тонна тислĕк кăларсан ыраш тухăçлăхĕ 28,3 центнера çитнĕ.

Тăпрана тарăн сухалани тĕрлĕ ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне мĕн чухлĕ ӳстернине тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе Чăваш ялхуçалăх институчĕн доценчĕ С. И. Андреев юлташ опытсем чылай туса ирттернĕ. Çурхи тулла вăрман тăрăхĕнчи хăйăрлă йывăр тăм тăпри çине акнă. Участока кĕрхи сĕртме тунă вăхăтра предплужниклă плугпа 28—30 сантиметр тарăнăш сухаланă. Удобренисене, гектар çине куçарса шутласан, акас умĕн çакăн чухлĕ кăларнă: суперфосфат—2 центнер, аммиак селитри—1 центнер, хлорлă кали—0,5 центнер. 20—22 сантиметр сухаласа удобренисем кăлармасăр акнă участокра тулă тухăçлăхĕ гектар пуçне 10,88 центнер, ӳсентăрана аталанма кирлĕ мĕнпур минераллă удобренисене—азот, фосфор тата кали—кăларнă участокра 18,85 центнер пулнă; 28—30 сантиметр сухаласа акнă участокра тулă тухăçлăхĕ, гектар çине куçарса шутласан, 23,43 центнер пулнă. Çапла ĕнтĕ, тăпра сийне тарăнлатнипе тулă тухăçлăхĕ 4,58 центнер е 24,3 процент ӳснĕ.

Тăпран сухалакан сийне тарăнлатни сĕрулми тухăçлăхне те нумай ӳстернĕ. Сăмахран, 20—22 сантиметр тарăнăш сухаласа удобренисем кăлармасăр лартнă участокра кашни гектартан 109 центнер, ӳсентăрана аталанма кирлĕ мĕнпур минераллă удобренисене кăларнă участокра 188,4 центнер пухса кĕртнĕ, 28—30 сантиметр сухаласа лартнă çĕрулми тухăçлăхĕ гектар пуçне 248,6 центнер пулнă. Урăхла каласан, унăн тухăçлăхĕ 32 процент ӳснĕ.

Тарăн сухалани пула сĕлĕ уйрăмах вăйлă пулнă. 20—22 сантиметр тарăнăш сухаласа удобренисем кăлармасăр акнă участокра, гектар çине куçарса шутласан, сĕлĕ 9,14 центнер, ӳсентăрана аталанма кирлĕ мĕнпур минераллă удобренисене кăларнă участокра 12,75 центнер тухнă. Удобренисем кăларса тарăн сухаласа акнă участокра кашни гектар пуçне 21,76 центнер пухса кĕртнĕ. Тепĕр майлă каласан, тăпран сухалакан сийне тарăнлатни сĕлĕ тухăçлăхне 9,01 центнер е 70 процент ӳстерме пулăшнă.

С. И. Андреев доцент туса ирттернĕ опытсем çакна çирĕплетсе параççĕ: удобренисемпе усă курса, сухалакан тăпра сийне тарăнлатни Чăваш АССР-ĕнчи кĕллĕ те хăйăрлă шупка-кăвак йывăр тăм тăпрасем çинче те тата вăрман тăрăхĕнчи хăйăрлă кăвак йывăр тăм тăпрасем çинче те производство тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнать.

Сухалакан тăпра сийĕн хулăмăшне 20—22 сантиметра çитернĕ колхозсенче çакăнпа кăна лăпланса лармалла мар, тăпран сухалакан сийне малалла тарăнлатса пымалла, ăна 25—30 сантиметра çитермелле.

Чăваш АССР-ĕнчи кĕл тăприсене тата вăрман тăрăхĕнчи шупка-кăвак тăпрасене икĕ тапхăрта тарăнлатмалла. Малтанхи тапхăрта тăпран сухалакан сийне 20—22 сантиметр хулăмăшне çитерсе лайăхлатмалла. Ку задачăна колхозсен çывăх çулсенчех пурнăçа кĕртес пулать. Çав тĕп задачăна пурнăçланă хыççăн, тăпран сийне тарăнлатас тĕлĕшпе иккĕмĕш тапхăр, сухалакан тăпра сийĕн хулăмăшне 25—30 сантиметра çитерес тапхăр пуçланать. Ку задачăна вăраха тăсмасăр пурнăçламалла. Унтан вара тăпрана пусă çаврăнăшĕ вăхăтĕнче 25—30 сантиметр тарăнăш 2—3 хут кăна сухаламалла, ытти çулсенче 20—22 сантиметр тарăнăш сухалас пулать.

Паллă ĕнтĕ, тăпран сухалакан сийне тарăнлатни агротехникăлла мĕнпур ĕçсене пĕтĕмпех лайăх пурнăçласан ытларах усă пама пултарать. Курăксем акса тăвакан пусă çаврăнăшĕсене тĕрĕс йĕркелеме, пăрçа йышши тата пучахлă нумай çул ӳсекен курăксене хутăштарса акма кирлине уйрăмах палăртмалла. Сухалакан тăпра сийĕ хулăм пулни çĕрĕç культури пысăккине кăтартса парать. Çавăн пек чухне ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тăтăшах ӳстерсе пыма май пур.

Маларах каланисене пĕрлештерсе, çакна астутарса калатпăр:

1. Тăпра сийне тырпул акиччен чылай малтан тарăнлатни усăллăрах, çавăнпа та ăна кĕркунне хура сĕртме тунă вăхăтра туса ирттермелле, мĕншĕн тесен кун пек чухне аялтан кăларнă тăпра сийĕ пĕр çулталăк хушши уçăлса выртать.

2. Аялтан сиеле кăларакан тухăçсăр арлан тăприне удобренисемпе лайăхлатмалла, кашни гектар çине 25—30 тонна тислĕк е торфпа тислĕкрен тунă компост кăлармалла, тăпра йӳçĕк пулсан, удобренисемсĕр пуçне кашни гектар çине 2—3 тонна известь е 4—6 центнер фосфор çăнăхĕ сапмалла.

3. Тăпра тухăçлăхне ӳстерес, унăн кĕрпеклĕхне лайăхлатас ĕçре пăрçа йышши курăксене пучахлă курăксемпе пĕрле акни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та ĕнтĕ тăпран сухалакан сийне тарăнлатас ĕçе нумай çул ӳсекен курăксене акассипе пĕрле туса пырсан аван.

4. Аялтан сухаласа кăларнă кĕл тăпри çине удобрени тума люпин акма юрать. Люпина сухаласа пăрахсан тăпрара органически япаласем нумай пулаççĕ, вĕсем вара тăпра пахалăхне лайăхлатаççĕ.

Тăпран сухалакан сийне тĕрĕс тарăнлатса пыни партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне лартнă тĕп задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пулăшĕ.

Т. КРУЖИЛИН,
Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ,
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Критикăпа библиографи

Ачасем валли çырнă сăвăсен кĕнеки

Иртнĕ çулта Чăвашсен государство издательстви Александр Алга çырнă «Çулталăк» ятлă сăвăсен кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекене пуçламăш шкулта вĕренекенсем валли кăларнă пулин те, ăна аслă классенче вĕренекенсем те, учительсем те вулаççĕ.

Кĕнекере пурĕ 32 сăвă. Вĕсенчен нумайăшĕ тăватă е пилĕк строфаллă анчах, вĕсем ачасен конкретлă ĕçĕсене кăтартаççĕ. Кĕнекери чылай сăвăсем сюжетлă, асра тытса тăма та çăмăл. Пурте тенĕ пекех вĕсем кăмăллă, тарăн шухăшлă. Вулакан чухне çĕршыв илемне туятăн, унăн пуянлăхне куратăн.

Сăвăсене çăмăл, ачасене çывăх тăракан чĕлхепе çырнă. Хăшпĕр сăвăсенче ачасен кăмăлне каякан юмор та пур, çавăнпа та вĕсем çăмăллăн вуланаççĕ.

Кашни сăвă пуçламăшĕнчех сăвă содержанине килĕштерсе тунă ӳкерчĕксем, çулталăкăн уйрăм вăхăчĕсене кăтартакан картинăсем кĕнекен пахалăхне тата та ытларах ӳстереççĕ. Художник П. Сизов ӳкерчĕксене тăрăшса тунă темелле. Кĕнекери картинăсем пĕчĕк пулсан та лайăх палăрмалла тухнă.

«Çулталăк» кĕнеке «Çутă уявра» ятлă сăвăпа пуçланать. Вулакан хăйĕн пĕчĕк чухнехи вăхăчĕпе паллашать. Аслă уявра ăна ашшĕ трибуна умĕнчен алă вĕççĕн йăтса иртнĕ. Тен, вăл ун чухне калаçма та лайăх вĕренсе çитеймен, анчах вăл юратнă çулпуççен сăнĕсене курсан: «Атте, ав, Ленин! Сталин!—тесе хавасланса кăшкăрнă, аллинчи пĕчĕк ялавне вĕлкĕштерсе саламланă. Урăхла пулма та пултарайман. Совет ачисем малтанах «Ленин», «Сталин» сăмахсемпе калаçма, çырма вĕренеççĕ. Кашни ир тăмассерен: «Ку—Ленин», «Ку—Сталин» тесе, хăйсен пĕчĕк аллисене тăсса портретсем çине кăтартаççĕ.

Çакă аслă ятсемпех вĕсем шкулта пĕрремĕш урока пуçлаççĕ. Çак ятсемпех вĕсем вĕренӳре те, ĕçре те çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ырми-канми ĕçлекен патриотсем пулма хатĕрленеççĕ.

— Эс—пĕчĕкçĕ. Паллан çеç халĕ.
Ӳссен çăна вĕсем çинчен
Кун-çул та, кĕнеке те калĕ,
Пурне те пĕлĕн-ха ӳссен,—тет ача ашшĕ. Вăл телейлĕ те тулăх пурнăç туса панăшăн чи юратнă аттемĕрсене, чи хисеплĕ çулпуçăмăрсене чун-чĕререн тав тăвать.

— Пурне те пĕлĕр-ха ӳсессĕн.
Халь сирĕншĕн ялан уяв.
Çак ытарма та çук телейшĕн
Çулпуççене—мухтав, мухтав!

Ачасен малалли пурнăçне поэт «Ылтăн кĕркунне», «Шурă хĕл», «Çутă çуркунне», «Ăшă çулла» пайсенче кăтартнă. Кашни пайĕнчех, çулталăкăн вăхăтне кура, ачасен пурнăçĕнче тĕрлĕрен ĕçсем пулса иртеççĕ. Вĕренекенсен пĕрремĕш обязанноçĕ—лайăх вĕренсе, Тăван çĕршыва савăнтарасси. Çак шухăш-ĕмĕтсемпе вĕренеççĕ те ĕнтĕ совет шкулĕнчи çамрăксем. Киле вĕренме панă уроксене пурне те вăхăтра хатĕрлеççĕ, уроксенче тимлĕн итлесе лараççĕ. Ун пек ачасем яланах лайăх паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ.

Акă Сантăр шкултан хĕпĕртесе таврăнать, вăл çав тери савăнăçлă. Унăн куçĕсем çиçсе тăраççĕ, тутисем кулаççĕ. Ăна нимĕнле йывăрлăхсем те хăратса тăмаççĕ.

— Эпĕ ĕçрен, тет, хăрамастăп,
Уроксем ялан ман янтă!
Çавăнпа та ман, тунмастăп,
Пысăк савăнăç паян та.
Тетрадьне сĕтел çине
Хучĕ вăл. Мĕн калăр!
Чăн: таса çыру хыçне
Лартнă «5» паллă,—тесе вулатпăр «Шкултан килсен» ятлă сăвăра.

Ку паллăсемпе ачасем хăйсем анчах савăнмаççĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те, пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем те, шăллĕсемпе йăмăкĕсем те савăнаççĕ.

Çав вăхăтрах автор кахалланса вĕренекенсене те витĕмлĕн кăтартса парать. Акă Верук та Сантăр пекех шкулта вĕренет. Лайăх вĕренме унăн та пур условисем те çителĕклĕ:

— Кĕнеке те пур Верукăн,
Кăранташ, тетрадь те пур —
Çыр, вула, картина кур.
Мĕн çитмест тата?
Мĕн çук ун?

Анчах Верукăн уроксене вĕренме тӳсĕмлĕх çитмест, нумайрах выляма юратать.

— Кантăкран пăхать Верук.
Уроксем асра та çук.
Урамра-çке тантăшсем!
Хатĕр те уроксем,
Эх, выляççĕ пӳскелле.
Епле унăн тӳсмелле?
Вăл та вĕçрĕ урама
Тантăшсемпе выляма...

Çавăнпа та ун пек ачасем шкултан начар паллăсем илсе таврăнаççĕ, ашшĕ-амăшĕсене хурлантараççĕ.

Çамрăк ăрăва коммунизмла воспитани парасси ĕçлĕхлĕ воспитани парассипе тачăн çыхăнса тăрать. Ачасене пĕчĕкренех ĕçе юратма вĕрентмелле. «Ĕçе юратни — коммунистсен йăла элеменчĕсенчен чи палли пулса тăрать»,—тесе каланă М. И. Калинин. «Çулталăк» кĕнекере ачасен ĕçлĕхлĕ воспитанийĕ «Пирĕн шкул пахчи», «Эпĕ ĕçлетĕп», «Мĕн лартмалла», «Тăр ирех—тух хире» сăвăсенче лайăх палăрса тăрать.

Пионерсемпе вĕренекенсем шкул пахчинче, техникăна вĕренмелли кружоксенче ĕçлеме юратаççĕ, май килнĕ таран, колхоз производствине те активлăн хутшăнма тăрăшаççĕ. Колхоза кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса параççĕ, çамрăк выльăхсене шефа илеççĕ тата ытти те.

— Ак эпир тихасене,
Чиперкке юпахсене,
Хырчăкпа [illegible] тасатрăмăр.
Умĕнчи кункăраран
Сĕллине çисе ярсан,
Шăхăрса шăвартăмăр,—теççĕ пионерсемпе шкул ачисем «Эпĕ ĕçлетĕп» ятлă сăвăра.

Çакăн пекех кĕнекере ачасен савăнăçлă вăййисене те, вĕсем канăвне те тĕплĕн кăтартса панă. Шкулта вĕренекенсем хĕлле пулассa савăнăçлăн кĕтеççĕ, ярăнмалли хатĕрсем тăваççĕ. Хĕл çитсен вара, мĕн чухлĕ савăнăç вĕсен! Шкула та йĕлтĕрсемпех каяççĕ.

Çуллахи вăхăтра нумайăшĕ пионерсен лагерĕсенче, тĕрлĕ походсемпе экскурсисенче пулса, хăйсен сывлăхне çирĕплетеççĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли çĕнĕ вăй сем пухаççĕ.

«Çулталăк» кĕнеке шкул ачисемпе пионерсемшĕн усăллă кĕнеке. Çавăнпа пĕрлех кĕнекери хăшпĕр çитменлĕхсем пуррине те палăртса хăвармалла. Кĕнекере шкул пурнăçĕ çинчен калакан сăвăсем сахалтарах. Пионер отрячĕсемпе звеносен ролĕ курăнмасть, учительсен ĕçĕсем палăрсах каймаççĕ. Кĕнекери пĕчĕк геройсем пурте тенĕ пекех сапаланчăклăн, пĕчченшерĕн е икшерĕн хăйсем тĕллĕн çеç курăнаççĕ.

Хăшпĕр сăвăсенче педагогикăпа килĕштерсе çырман вырăнсем тĕл пулаççĕ.

«Ачашларĕ те асламăш,
Хыврĕ те чипер пумне,
Акă, çăмарта хăпартмăш
Хăвăрт лартрĕ ун умне,—
вулатпăр «Шкултан килсен» ятлă сăвăра. Кунта ачана ытлашши ачашлани сисĕнет. Ачана çапла ачаш ӳстерни ăна иртĕхтерсе ярать, ачапа вĕрентет. Ун пек ачасем малашнехи пурнăçра хăйсен интересĕсемшĕн анчах тăрăшакансем пулаççĕ, ӳсе çитĕннĕ çĕре пĕтĕмпех эгоист пулса тăраççĕ.

«Елĕкхипе хальхи» ятлă сăвăра шкулта вĕренекен ачана çăкăр мĕнле пулнине пĕлмен пек туса кăтартнă. Çăкăр колхоз ачисемшĕн çĕнĕ япала мар, вĕсене çывăх, куç умĕнче пулса пыракан япала.

Кĕнекере хăшпĕр çитменлĕхсем пур пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, вăл питĕ кирлĕ кĕнеке. Александр Алга поэтпа П. Сизов художник «Çулталăк» ятлă кĕнекене кăларса пысăк та пархатарлă ĕç тунă. Ку кĕнеке, çамрăк ăрăва коммунизмла воспитани парас ĕçре ачасемшĕн анчах мар, учительсемшĕн те питĕ усăллă. Шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем çавăн пек кĕнекесем тата ытларах кăларасса кĕтеççĕ.

В. АНТОНОВ,
Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.

Редакцие килнĕ çырусем

Ял Совечĕ вулав çуртне пулăшмасть

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Иштеккасси ял Совечĕн председателĕ В. Ярадайкин юлташ вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатма тăрăшмасть. Иртнĕ çулта вулав çурчĕ валли кĕнекесем илме 600 тенкĕ пама палăртнă пулсан, кĕнекесем 460 тенкĕлĕх çеç туяннă. Кăçал та кĕнеке илме çавăн чухлех укçа пама пăхнă, анчах халиччен пĕр пус та паман. Вулав çурчĕн библиотекинче кĕнекесем питĕ сахал. Вулав çурчĕн заведующийĕ И. Швешкеев юлташ вулавçăсем ыйтакан кĕнекесене тупса параймасть, мĕншĕн тесен вĕсем библиотекăра çук.

Колхозниксемпе колхозницăсем хаçат-журналсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа пĕлесшĕн вулав çуртне сахал мар пыраççĕ. Анчах унта республикăра тухса тăракан хаçатсем те, районти хаçат та çук. Ял Совечĕ вулав çуртне валли хаçатсем çырăнса илмен. Журналсенчен те, «Ялав» журналпа «Агитатор блокночĕсĕр» пуçне, урăх нимĕн те çук.

Ял Совет руководителĕсем вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатма хăçан та пулин пулăшĕç-ши?

В. ЧОБАЙКИН.

Шкулти правилăсене чăвашла пичетлесе кăлармалла

Нăрваш Шăхалĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта пурĕ 12 класс, вĕсенче 300 ача вĕренет. Çак асăннă 12 класран 5-шĕнче шкул ачисем хăйсене мĕнле тыткаламалли правилăсем çук, 7 класра правилăсем пур, вĕсене пурне те вырăсла çырнă.

Пĕр вăхăтра чăвашла çырнă правилăсем пурччĕ. Анчах та юлашки çулсенче вĕсене ниçта та тупма çук.

Чăваш АССР Сутĕç министерствипе Чăвашгосиздатăн шкул ачисем хăйсене мĕнле тыткаламалли çинчен çырнă правилăсене чăвашла пичетлесе кăлармалла.

И. МИТРОФАНОВ.
Первомайски районĕ.

Почта çуртне шыв анать

Пирĕн Шĕмшеш ялĕнче почта уйрăмĕ пур. Анчах почта çурчĕн çивитти кивелсе пĕтнĕ. Çумăр чухне почтăна шыв анать.

Почта уйрăмĕ культурăлла вырăн пулма кирлĕ, мĕншĕн тесен унта яланах çынсем пулаççĕ. Советски районĕнчи çыхăну кантурĕн начальникĕ Малов юлташ Шĕмшешри почта уйрăмĕн çуртне юсама тимшĕн тăрăшмасть.

Н. ВАСИЛЬЕВ,
Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕ.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

ПАРАЧКАВ. Районти хăшпĕр колхозсемпе колхозниксем Майăн 1-мĕшне государствăна аш-какай, сĕт-çу тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем срокчен парса татнипе кĕтсе илчĕç.

«Красная горка» колхоз 1953 çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ тата пĕрремĕш кварталта сĕт памалли плана 360 процент тултарчĕ. Аш-какайпа сĕт-çу памалли пĕрремĕш квартальти плана М. Горький ячĕпе тăракан колхоз та икĕ хут ирттерсе тултарчĕ. Ильич ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан, «Ударник», Ленин ячĕпе, Суворов ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан колхозсем аш-какайпа сĕт-çу памалли 1953 çулхи обязательствăна çурри ытла пурнăçланă.

Районти 11 ял Советĕнче колхозниксем аш-какай памалли пĕрремĕш квартальти плана срокчен тата ирттерсе тултарчĕç. 18 ял Советĕнчи колхозниксен хуçалăхĕсем сĕт-çу памалли квартальти плана 130—170 процент тултарчĕç. Сĕт-çу парассипе Никольски, Полибино, Висягино, Горт ял Совечĕсем малта пыраççĕ.

В. ТОНЫШЕВ.

Район центрĕ илемлĕ пулать

СОВЕТСКИ. Район центрĕ юлашки çулсенче чылай лайăхланчĕ тата илемленчĕ. Учрежденисем, культурăпа йăла учрежденийĕсем валли çĕнĕ çуртсем лартнă. Халĕ районти универмаг, чайнăй, пекарня, çыхăну кантурĕпе радиоузел çĕнĕ çуртсенче ĕçлеççĕ.

Пĕлтĕр район центрĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем урамсене тата учрежденисем çывăхне йывăçсем чылай лартса хăварчĕç. Учрежденисен çурчĕсем тавра картасем тытнă.

Рабочисемпе служащисем район центрне илемлетессине хăйсен хисеплĕ тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Çак кунсенче предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен профсоюз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта район центрне илемлетесси çинчен сӳтсе яврĕç. Профсоюз членĕсем урам хушшине, хăйсем ĕçлекен учрежденисен таврашне илемлĕ йывăçсемпе улма-çырла йывăççисем лартса ӳстерме, палисадниксем, чечек клумбисем тума, çавăн пекех урамсене, çуртсем таврашне таса тытса тăма пулчĕç. Район центрĕнче спорт ĕçне юратакан çамрăксем нумай, анчах ку таранччен спорт площадки пулман. Профсоюз членĕсем хăйсен вăйĕпе спорт площадки тăваççĕ.

Профсоюз членĕсем хăйсен сăмахне ĕçпе çирĕплетсе пыраççĕ. Урамсене, учрежденисем таврашĕсене çӳп-çапран тасатса тухнă. Халĕ йывăçсем лартса хăвараççĕ.

Район центрĕнче çитес вăхăтра культурăпа кану паркĕ, шыва кĕмелли вырăн тума палăртнă.

Я. СИГАЕВ.

Ялти клубăн паянхи ĕçĕ

Сĕнтĕр районĕнчи Янăмри клуб ялти чăн-чăн культура центрĕ пулса тăрать. Вăл ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана пурнăçлама массăсене мобилизацилес ĕçе туса пырать.

Клуба плакатсемпе, лозунгсемпе, портретсемпе илемлетнĕ. Пирĕн Тăван çĕршыври çитĕнӳсене кăтартакан витринăсемпе диаграммăсем те пур.

Колхозниксемпе колхозницăсем тата интеллигенци клуба юратса çӳреççĕ. Вĕсем кунта докладсемпе лекцисем итлеççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ, пушă вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Клубра час-часах кинокартинăсем кăтартаççĕ, тăташах постановкăсем пулаççĕ.

Клубăн актив пур, унăн йышĕ куллен ӳсе пырать. Активистсем тăрăшса ĕçленипе кăçалхи çул клуб çумĕнче 5 номер, ял Советне кĕрекен колхозсенче 7 номер стена хаçачĕсем кăларнă. Уйрăммăнах А. Павлов, Б. Михайлов, Т. Кузнецова юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем бригадăсенче эрнере виçшер хут каласусем ирттереççĕ, клубпа ĕççыннисем хушшинчи çыхăнăва тăташах çирĕплетсе пыраççĕ.

Клуб çумĕнче лекторсен ушкăнĕ ĕçлет, ăна шкул директорĕ А. Павлов юлташ ертсе пырать. Лекторсен ушкăнĕ кăçалхи çул колхозниксем валли 25 лекци, доклад туса панă, вĕсене пурĕ 2 пин çын ытла итленĕ. Уйрăммăнах колхозниксене А. Павлов лектор «Социализмран коммунизма куçмалли майсем», С. Яндушкин лектор «Çĕр чăмăрĕн аналлăхĕпе пуласлăхĕ» тата И. Сергеев лектор «Колхозник çемйинчи санитарипе гигиена» ятлă темăсем тăрăх тунă докладсем пурне те килĕшнĕ.

Колхоз уй-хирĕсенче сураки ĕçĕсем пуçлансанах клуб хăйĕн ĕçне колхозниксем ĕçленĕ çĕре куçарчĕ. Тăхăр çынтан йĕркеленĕ агиткультбригада уйра ĕçлекен колхозниксем хушшинче каласусемпе докладсем тата концертсем ирттерет.

Клуб çумĕнче библиотека пур. Ăна организациленĕ çур çул çеç çитрĕ пулин те, библиотека кунсеренех пуянланать. Паянхи куна библиотекăра пурĕ 2 пин ытла кĕнеке, вĕсене вулакансен йышĕ 400 çынна яхăн шутланать. Уйра ĕçлекенсем валли виçĕ куçса çӳрекен библиотека тунă. Куçса çӳрекен библиотекăсенче М. Кондратьев, С. Коротков, С. Самаков комсомолецсем ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксене интереслентерекен кĕнекесем илсе пыраççĕ, тĕрлĕ темăсем тăрăх каласусем ирттереççĕ.

Клуб çумĕнче хорпа драма тата музыка кружокĕсем ĕçлеççĕ, вĕсенче пурĕ 54 çын шутланать. Кăçалхи çул кружоксем колхозниксем валли 5 концерт панă.

В. ИГНАТЬЕВ.

КӲРШĔ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧЕ



Мордва АССР-ĕнчи колхозсенче сураки тăваççĕ. Колхозниксемпе механизаторсем суракине хăвăрт, агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерсе вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварма тăрăшаççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чукальски МТС-ĕн улттăмĕш трактор бригадинче. Учитель-агитатор Ю. Д. Кучаев трактористсемпе калаçу ирттерет.

В. ВЕСЕНЬЕВ фотоӳкерчĕкĕ.

Мордва халăхĕ çак кунсенче

Пирĕн аслă çĕршывра пур çĕрте те хавасла ĕç вĕресе тăрать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçнĕ совет халăхĕ вилĕмсĕр Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕнче кăтартса панă тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенче палăртнă коммунизм строительствин аслă задачисене хăвăртрах пурнăçласассишĕн çине тăрса кĕрешет.

Мордва Автономиллĕ Советлă Социализмла Республикинчи рабочисем, колхозниксемпе интеллигентсем Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле хăйсен пĕтĕм вăйне коммунизм строительствишĕн пама тăрăшаççĕ.

Пирĕн республикăри хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх палăртнă заданисене ăнăçлăн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнчĕç. Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем ытларах продукци туса кăларас, унăн пахалăхне ӳстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тата оборудованипе тухăçлăрах усă курас тĕлĕшпе çĕнĕ, пысăкрах обязательствăсем илчĕç.

Саранск хулинчи сӳс-кантăр комбиначĕн коллективĕ, çĕвĕ çĕлекен фабрика, электропромышленность завочĕ, махорка фабрики тата ытти чылай предприятисен коллективĕсем ăмăртура малта пыраççĕ. Кашни кунах халĕ производствăра малта пыракан рабочисем, рационализаторсем, стахановецсем çинчен çĕнĕ хыпарсем килсе тăраççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура Саранскри консерва комбиначĕ уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Комбинат коллективĕ илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешет. Пĕрремĕш квартал планне чылай ирттерсе тултарнă.

Уметри çуртсем тăвакан комбинатри рабочисем стахановла хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем коммунизм стройкисенче ĕçлекенсем валли стандартлă çуртсем тумалли плана чылай ирттерсе тултараççĕ. Коммунизм стройкисенче ĕçлекенсем комбината час-часах çырусем çырса яраççĕ, илемлĕ те лайăх çуртсем туса панăшăн комбинатри рабочисене тав тăваççĕ. Çав çырусем çуртсем тăвакансене малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ.

Мордва республикинчи ĕççыннисем производство новаторĕсен—сӳс-кантăр комбинатĕнчи çип арлакан Трофимовăпа Рыжова, Цыганов формовщик, Зенков электросварщик тата Карасева намотчица (электропромышленность завочĕ) ячĕсене тивĕçлипе ырласа асăнаççĕ. Саранскри предприятисенче кăна халĕ стахановецсемпе ударниксем 7 пин çын ытла шутланаççĕ, вĕсенчен 5 пин çынна яхăн 1953 çулхи пĕрремĕш квартальти задание срокчен пурнăçланă.

Кăçал, вырăнти тата коопераци промышленноçĕ, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, чылай лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Промысла артелĕсен, районсемпе хуласенчи промкомбинатсен коллективĕсем, съезд директивисене пурнăçласассишĕн кĕрешсе, халăха кирлĕ тавар ытларах туса кăлараççĕ, колхозсене кирлĕ хатĕрсем нумайрах туса параççĕ.

Республикăри предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ пысăк хăвăртлăхпа ӳсе пырать, предприятисем çĕнĕ техникăпа пуянланаççĕ. Республикăри промышленность валовой продукци туса кăлармалли 1952 çулхи плана 102 процент тултарчĕ, 1951 çулхипе танлаштарсан, 12 процент ытларах продукци туса хатĕрлеме пултарчĕ. Вырăнти тата коопераци промышленноçĕ иртнĕ çулхи программăна 102,4 процент тултарнă.

Юратнă Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн, унăн хăватне тата ытларах ӳстерессишĕн республикăри чугун çул çинче ĕçлекенсем пĕтĕм чунтан тăрăшаççĕ. В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан чугун çулăн Рузаевка уйрăмĕн коллективĕ халăх хуçалăхне кирлĕ грузсене турттармалли государство планне çителĕклипех тултарчĕ, локомотивсемпе тата вагонсемпе тухăçлăрах усă курма хăнăхрĕ.

Мордва республикинчи çыхăну работникĕсем хушшинче чапа тухнă новатор—çыхăну мастерĕ, линейнăй надсмотрщик Лемен юлташ. Унăн новаторла меслечĕ хăмăр республикăра кăна мар, ытти республикăсенче те саралнă.

Партипе правительство Мордва АССР-ĕн экономикине ӳстерессишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Промышленность предприятисем тума нумай укçа-тенкĕ уйăрса панă. Çав предприятисене туса пĕтерсен Саранск хули кăна мар, пĕтĕм республикăн сăн-сăпачĕ улшăнать. Хальхи вăхăтра çĕнĕ заводсем чылай тума тытăннă.

Мордва АССР-ĕн ялхуçалăхĕ те пысăк хăвăртлăхпа аталанать. Юлашки икĕ çул хушшинче республикăри колхозсен акмалли çĕр лаптăкĕ чылай ӳсрĕ, апат-çимĕç тумалли паха культура—тулă, техникăллă культурăсем (кантăр, сахăр кăшманĕ) ытларах акма тытăннă. Выльăх апачĕ тумалли культурăсене те халĕ нумайрах акаççĕ, нумай çул ӳсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкĕ те чылай пысăкланчĕ.

Пирĕн ялхуçалăхĕ техника тĕлĕшпе нумай пуянланчĕ. Пĕр 1952 çулта кăна республикăри машинăпа трактор станцийĕсем 400 ытла трактор, çавăн чухлех комбайн туяннă. Çакна пула çурхи культурăсене акассипе çĕртме сухи тăвассине 90 процент таран механизациленĕ, хура çĕртме тăвассине—100 процент, пĕрчĕллĕ тырăсене пухса кĕртессине—68 процент, кĕрхи çĕртме тăвассине 98 процент механизациленĕ.

Республикăри ялхуçалăхĕ кăçал та çĕнĕ машинăсем нумай туянать.

Пирĕн нумай колхозсен çĕреç культури палăрмаллах ӳсрĕ. Сăмахран, 1953 çулта республикăри пур колхозсем те нумай уйлă пусă çаврăнăшĕ çине куçаççĕ.

Тăпрана сухаласа кăпкалатасси лайăхлансах пырать, тарăнрах сухалаççĕ, хăмăл сухаласси те ӳсет; органикăлла тата минераллă удобренисемпе ытларах усă кураççĕ.

Малта пыракан агротехникăпа усă курнине тата çĕреç культурине ӳстернине пула иртнĕ çулта чылай колхозсем пысăк çĕр лаптăкĕсем çинче пĕрчĕллĕ тата техникăлла культурăсем ытларах пухса илчĕç. Сăмахран, Куславкка районĕнчи «Знамя труда» колхоз (председателĕ Волков юлташ) акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 16,28-шер центнер пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем пухса илнĕ. Торбеевски районĕнчи «Серп и молот» колхоз (председателĕ Жуков юлташ) 178 гектар çинче кашни гектартан 18-шар центнер ыраш, 55 гектар çинче кашни гектартан 20-шер центнер вир пухса илнĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен ĕçĕнче тата пысăкрах ӳсĕмсем пур. Сăмахран, Ковылкински районĕнчи «Гигант» колхозри Будников юлташ ертсе пыракан бригада 53 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 23,5 центнер ыраш пухса илнĕ. Березниковски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри Ромашкина юлташ ертсе пыракан бригада 41 гектар çинче кашни гектартан 25-шер центнер кĕрхи ыраш пухса илнĕ.

Республикăри ялхуçалăх артелĕсем общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те чылай çитĕнӳсем тунă. Аслă Березниковски районĕнчи колхозниксем лаша ĕрчетмелли плана 109,3 процент, мăйракаллă шултра выльăх енĕпе—112,9 процент, сурăхсем енĕпе—111,8 процент, сыснасем енĕпе—104,5 процент тултарнă. Инсарски районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Теньгушевски районĕнчи «Обновление», Ширингушски районĕнчи Ленин ячĕпе, Ельниковски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те пур тĕрлĕ йышши выльăх-чĕрлĕх тата чăх-чĕп ĕрчетес плана тултарса çитернĕ. Инсарски районĕнче артельсем кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1.303 килограмм, Кочелаевски районĕнчи колхозсенче—1.236 килограмм, Кадошкински районĕнчи колхозсенче 1.167 килограмм сĕт суса илнĕ.

Республикăра совет биологи наукипе анлăн усă курса выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен мастерсем нумай ӳсе çитĕнчĕç. Инсарски районĕнчи «Путь к коммунизму» колхозри Кутлинская доярка, фермăра тĕрĕс рационпа усă курса, выльăхсене пĕлсе тăрантарса, хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 2.781 килограмм, çав районти «Молот» колхозри Кудряшова доярка кашни ĕнерен 2.530 килограмм сĕт суса илнĕ. Пирĕн таврара Зубово-Полянски районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозри чабансен ĕç опычĕ анлăн саралчĕ. Вĕсем 100 сурăхран 171 путек илсе ӳстернĕ.

Республикăри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем халĕ 1953 çулта тата пысăкрах ӳсĕмсем тăвас, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх заданине чыслăн пурнăçлас, Тăван çĕршывăмăра аш-какай, сĕт, çу, çăмарта тата тир-сăран ытларах хатĕрлесе парас ĕмĕтпе хавхаланса ĕçлеççĕ.

Мордва республикинчи колхозниксем кăçал кашни гектартан 13,2 центнер пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культура, 110 центнер çĕрулми, 13,2 центнер махорка, 140-шер центнер сахăр кăшманĕ, 4,8 центнер кантăр сӳсĕ пухса илме хăйсен умне задача лартнă.

Уй-хир бригадисемпе трактор бригадисем хушшинчи ĕçри туслăх çирĕпленсех пырать. Колхозниксемпе механизаторсем, вăйлă тырпул туса илессе шансах тăраççĕ.

Совет государстви Мордва халăхĕн содержанийĕ социализмла, форми нацилле культурине малалла аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшать. Республикăра пурĕ 1.327 шкул пур, вĕсенче 186.200 çын—колхозниксен, рабочисемпе интеллигентсен ывăл-хĕрĕсем вĕренеççĕ. Рабочисемпе ялти çамрăксен шкулĕсем—123. Педагогика тата учительски икĕ институт уçнă, наукăпа тĕпчев институчĕ тата ун çумĕнче аспирантура ĕçлет, облаçри парти шкулĕ, специальнăй вăтам шкулсем—18, ФЗО шкулĕсем—4, ремесленнăй училище—1, ялхуçалăх шкулĕ—4, колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли икĕ çуллăх шкул—1, механизаци шкулĕсем—4, фельдшерсемпе акушерсем вĕрентекен шкул т. ыт. те. Клубсем, вулав çурчĕсем, библиотекăсем нумай уçнă.

Государство издательстви марксизм-ленинизм классикĕсен 71 произведенине мордвалла куçарса пичетлесе кăларнă. Районсемпе хуласенче 35 хаçат тухса тăрать.

Республикăра писательсен союзĕ, художниксен союзĕ, государство драма театрĕ, филармони, юрăпа ташă ансамблĕ тата халăх инструменчĕсен оркестрĕ пур.

Нацилле кадрсем—учительсем, врачсем, агрономсем, инженерсем, артистсем, писательсем, художниксем, ученăйсем вĕренсе çитĕнчĕç. Иртнĕ икĕ çул хушшинче, Мордва АССР наукăпа тĕпчев институчĕ çумĕнче, аспирантурăра наукăсен кандидачĕсем 21 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра наукăсен кандидачĕн ученăй степенне илнĕ çынсем 52 шутланаççĕ.

Ĕççыннисем валли пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç лайăхлансах пырать. Иртнĕ çулта 9.995 тăваткал метр таран пурăнмалли çуртсем туса пĕтерсе панă. 1953 çулта Саранск хулинче пурăнмалли çуртсем тума 20 миллион тенкĕ ытла укçа уйăрнă. Хулари ĕççыннисем валли кăçал 20 пин тăваткал метр пурăнмалли çуртсем хатĕр пулаççĕ.

Ленинла-сталинла наци политикине пула ирĕке тухнă мордва халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тăванла çемйинче пурăнса, коммунизм строительствине активлă хутшăнать.

М. СЕЛЮНИН,
Мордва АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ.

Корейăра В. И. Ленинпа И. В. Сталин ĕçĕсене пичетлесе кăларасçĕ

ПХЕНЬЯН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри ĕçлĕх партийĕн издательстви В. И. Ленинпа И. В. Сталин экономика строительстви ыйтăвĕсем тăрăх çырнă произведенисен сборникĕн пĕрремĕш томне пичетлесе кăларнă. Сборник «Социализмла экономика строительстви» ятлă. Ăна тăватă томпа кăларасçĕ.

Çак сборник, тесе çырать «Нодон синмун» хаçат, Корейăри парти работникĕсене, экономистсене тата хозяйственникĕсене пысăк пулăшу парĕ.

Совет Çарне тав туса

ВАРШАВА, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Сталиногруд воеводствинчи Мысловица хулинче Çĕнтерӳ Кунĕ ячĕпе Совет Çарне тав туса лартнă обелиска савăнăçлăн уçнă.

Çӳлĕ постамент çине Совет Çарĕ салтакĕн гранитран касса тунă скульптурине вырнаçтарса лартнă. Совет воинĕн скульптурине юнашар горнякпа скульптурипе Силези работницин скульптури тăрать. Вĕсем ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешӳ ялавне çĕкленĕ.

Обелиска хулари халăх укçипе туса лартнă.

Пĕтĕм Китайри профсоюзсен VII-мĕш съезчĕ

ПЕКИН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян *Пĕтĕм Китайри профсоюзсен VII-мĕш съезчĕ* хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ. Пĕтĕм Китайри профсоюзсен федерацийĕн 4 çул хушшинчи ĕçĕсен итогне тунă тата государствăри планлă строительство ĕçĕсем тĕлĕшпе Китайри профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсене палăртнă. Съезд çĕнĕ Устав йышăннă, федераци исполкомне, çавăн пекех Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен виççĕмĕш конгресне кайма делегаци суйланă.

Съезд Мао Цзэ-дун патне, Китай халăх добровольцĕсем патне тата Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине саламлă телеграммăсем яма йышăннă.

Председатель пулса ертсе пыракан Лай Жо-юй съезд ĕçне хутшăннă ытти çĕршывсенчи профсоюзсен делегачĕсене съезд ячĕпе тав тунă.

Профсоюзсен хĕвелтухăç Китайри совечĕн председателĕ Лю Чжан-шэнь юлташ сăмах каланă хыççăн съезд хупăннă.

ВЕНГРИРЕ ПОЛИТИКĂЛЛА ТАТА НАУКĂЛЛА ПĔЛӲСЕМ САРАКАН ОБЩЕСТВО ТУНĂ

БУДАПЕШТ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире, Совет Союзĕн примерĕпе, политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Общество туса хунă. Çĕнĕ Обществăн задачи вăл — ĕççыннисем хушшинче наукăлла тата политикăлла пĕлӳсем сарасси пулать. Обществăра пĕтĕмпе 12 секци пулать: биологи, географипе геологи, историпе литература, техника секцийĕ тата ыттисем те.

МОНИКА ФЕЛТОНА КАНАДĂНА ПЫМА ИРĔК ПАМАНШĂН КАНАДА ХАЛĂХĔ ХЫТĂ ТĂРĂХАТЬ

Канада правительстви Моника Фелтона Канадăна пыма ирĕк паманнине хирĕçлесе Оттава хулинче митинг пулса иртнĕ.

Митингра доктор Эндикотт çапла каланă: Канада влаçĕсем Канада гражданĕсене пĕтĕм тĕнчипе паллă обществăлла деятельсен сăмахне итлеме парас мар тĕлĕшпе çакăн пек киревсĕр ĕçсем пĕр хут кăна мар тăваççĕ, тенĕ. Эндикотт хăйĕн сăмахĕнче çавнашкал киревсĕр ĕçе хирĕçлесе çĕршыври нумай хуласенчи организацисемпе уйрăм çынсенчен телеграммăсем илни çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян пĕлтернинче çапла каланă: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Сомадон тата Пенмадон районĕнче тăшмана хирĕç разведка тăвас тĕллевпе çапăçнă.

Араб государствисен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ хупăннă

КАИР, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Араб çĕршывĕсен Лигине кĕрекен 8 государствăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ майăн 10-мĕшĕнче хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, канашлăва хутшăннисем хĕвеланăç державăсем вăтам-хĕвелтухăç командованийĕ тенĕскерне тăвас пирки кăларса тăратнă сĕнĕве сирсе пăрахни çинчен, çавăн пекех тата Англин хĕçпăшаллă вăйĕсене Суэц каналĕн зонинчен ним хирĕçсĕр тăмасăр илсе тухмалла тăвас ĕçре Египета «тулли пулăшу пама» хатĕр тăни çинчен пĕлтернĕ. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем йышăннă чылай резолюцисенче çак шухăш палăрса тăрать.

Египет премьер-министрĕ Нагиб пĕлтерни

КАИР, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Палестина вăрçи вăхăтĕнче çапăçса вилнĕ салтаксене асăннă чухне майăн 10-мĕшĕнче премьер-министр Нагиб каланă сăмаха пичетлесе кăларнă.

Англи çарĕсене Суэц каналĕн зонинчен илсе тухмалла тăвас пирки тăракан ыйтусем çинче чарăнса тăрса, Нагиб çапла каланă: «Египет правине никам та хирĕç тăма пултараймасть. Англи 1922 тата 1936 çулсенче Египета панă пек «никама пăхăнманлăхна» Египет çураçма пултараймасть, мĕншĕн тесен çакнашкал «никама пăхăнманлăх» вăл колони йĕркине çаплипех хăвармалла тăвассине пĕлтерет».

Нагиб пĕрлĕхлĕ пулма чĕннĕ, çапла каланă: «Эпир аслă çапăçусем умĕнче тăратпăр, çав аслă çапăçура пире çак таса аслă вăрçа хатĕрленессинчен пуçне урăх нимĕн те пулăшма пултараймасть...»

Парижри хаçатсем Тунисри суйлав çинчен

ПАРИЖ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). *Парижра тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх,* ĕнер Тунисри 34 коммунăра муниципалитетсен суйлавĕ пулса иртмелле пулнă. Анчах суйлав, тĕрĕссипе илсен, пĕтĕмпех путланса ларнă. Тунис çыннисем, тесе çырать «Юманите» хаçат, суйлава хирĕç чăн-чăн бойкот тунă. Кăнтăрлаччен суйлав участокне пĕр Тунис çынни те пыман. Франци çыннисем сасăлакан участоксенче суйлавçăсенчен çурри яхăн суйлава хутшăнман. 11 коммунăра, кандидатсем пулман пирки, суйлав пачах пулман.

Тунисра муниципалитетсен суйлавĕ *путланса ларнине буржуалла хаçатсем те* йышăнаççĕ. «Комба» хаçат Тунис суйлавçисем чăнниппех «забастовка» туни çинчен çырать.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, суйлава хирĕçлесе тата колони влаçĕсем хĕсĕрленине хирĕçлесе Сус хулинчи ĕççыннисем ĕнер забастовка пуçласа янă. Хулара магазинсемпе лавккасем хупă тăраççĕ. Бизерта тата Ферривиль хулисенче Тунис халăхне суйлава хутшăнассине хирĕç тăма чĕнсе кăларнă листовкăсем саланă.

Францири коммуна мэрĕсен суйлавĕ

ПАРИЖ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра çĕнĕрен суйланнă муниципалитет совечĕсен членĕсем коммунăсен мэрĕсене суйлаççĕ. «Юманите» хаçат çак суйлавăн хăшпĕр итогĕсене пичетлесе кăларнă. Чылай хуласемпе ялсенче социалистсем, суйлавçăсем тарăхса çитесрен хăраса, буржуалла партисемпе уççăн килĕшӳ тума хăяйман. Çавăнпа та çак пек вырăнсенче социалистсен партийĕпе реакци коммунистсен партине хирĕç пĕр блок тума хăтланни ăнăçлă пулман. Тарб (Тури Пиреней департаменчĕ), Курнев (Сена департаменчĕ) тата ытти хуласенче мэрсем пулма Францири Коммунистсен партийĕн кандидачĕсене суйланă. Нумай коммунăсенче муниципалитет советникĕсем пулса тăракан социалистсем, хăйсен партийĕн руководстви кăтартса панине пăхмасăр, коммунистсемпе пĕр блок туса суйлава тухнă. Кун пек вырăнсенче буржуалла партисем хăйсен кандидачĕсене мэрсем пулма суйлаттарма пултарайман. Çавăн пек, Лонгви (Мерт тата Мозель департаменчĕ), Мюлуз (Тури Рейн департаменчĕ), Алес (Гар департаменчĕ) тата ытти хуласенче мэрсем пулма Францири Коммунистсен партийĕ тăратнă кандидатсене суйланă.

Социалистсен партийĕн руководстви мэрсене тата вĕсен советникĕсене суйланă чухне Францири Коммунистсен партийĕпе пĕрлĕх тăвассине хирĕç тăнă. Нумай хуласенче вăл буржуалла мĕнпур партисемпе уççăнах союз тунă. Сылтăм социалистсем çакнашкал тактика тытнине пула, реакциллĕ партисем, уйрăммăн илсен, деголлевецсен партийĕ хăйсен кандидачĕсене мэр пулма суйлаттарма пултарнă. Сотвиль (Манш департаменчĕ), Левулуа-Перр (Сена департаменчĕ) тата ытти коммунăсенче çавăн пек пулнă. Сылтăм социалистсен руководителĕсем хăйсен вырăнти организацийĕсем коммунистсемпе пĕр союз тума йышăннă решенисене те пăрахăçа кăларнă. Сăмахран, социалистсен партийĕн Нор департаментĕнчи федерацийĕн руководстви хăйĕн Дюнкерк хулинчи секцийĕ коммунистсемпе пĕр союз тума йышăннă решение пăрахăçа кăларнă. Çавăнпа та унта хула мэрĕ тата унăн помощникĕсем пулма деголлевецсен партийĕпе католиксен партийĕн представителĕсене суйланă.

АНГЛИ ВЛАÇĔСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРЕ ÇАР ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СРОКЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи влаçĕсем ĕнер Верле тĕрминчен (Вестфали) тата тепĕр çар преступникне—Карл Гутенбергĕра ирĕке кăларнă. Гитлерла коалицие хирĕç пыракан çĕршыв гражданĕсене сулсăр-мĕнсĕр персе пăрахма гестапăна ирĕк парса приказ кăларнăшăн айăпласа, ăна 1948 çулта 12 çуллăха хупса лартмалла тунă. Гутенбергер — юлашки эрне хушшинче Верле тĕрминчен ирĕке кăларнă пиллĕкмĕш çар преступникĕ пулса тăрать.

Италири парламент суйлавĕ умĕн

РИМ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Мессаджеро» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Италире суйлав умĕнхи митингсем 6 пин ытла пулса иртнĕ.

Анкона хулинче пулнă митингра Пальмиро Тольятти тухса каланă. Ку митингра Анкона провинцийĕнчи тĕрлĕ районсенчен пынă пиншер ĕççыннисем пулнă.

Италири компартин генеральнăй секретарĕн заместителĕ Лонго Феррара хулинче пулнă митингра тухса каланă. Митингра 50 пин çынна яхăн пулнă. Лонго правительствăна вăл Итали алăкĕсене ют çĕршыв çарĕсем валли уçса панăшăн айăпланă. Правительство ют çĕршыв çарĕсемпе Итали халăхне хирĕç кĕрешес ĕçре усă курма шутлать. Лонго çавăн пекех тата Италири рабочисен пурнăçĕ начарланса çитнине кăтартса панă.

Палермо хулинчи митингра — Джузеппе ди Витторио, Пистойя хулинче—Умберто Террачини, Флоренцире — Пьетро Ненни тухса каланă. Коммунистсемпе социалистсен партийĕсен митингĕсем çĕршыври ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

Полици демонстрантсем çине тапăннă

МОНТЕВИДЕО, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-па çар килĕшĕвĕ тăвассине хирĕçлесе майăн 8-мĕшĕнче Монтевидео хулинчи университет площадĕнче çамрăксен митингĕ пулса иртнĕ. Митинга университетра вĕренекен студентсен федерацийĕ *организациленĕ.*

Митинга темиçе пин çын хутшăннă. Митинг хыççăн демонстраци пулса иртнĕ.

«Эль Дебате» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, демонстрантсем çине çуран тата утлă полицейскисем тапăннă. Полици демонстрантсене резина патаксемпе хĕнеме пуçланă. Нумай студентсене, çавăн пекех тата урамра ăнсăртран пулнă çынсене амантса пĕтернĕ. Полици чылай çынсене арестленĕ.

«МОРГОН-ТИДНИНГЕН» ХАÇАТ АТЛАНТИКА БЛОКĔНЧИ ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Моргон-Тиднинген» хаçат çырнă тăрăх, Çурçĕр-Атлантика блокĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ сессийĕ йышăннă решенисем çак союзри «хирĕçӳсене пытарса тăма пултараймаççĕ».

«Хĕвеланăç Европа, — тесе кăтартса парать хаçат, — çак союзра тăрса хăйĕн задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе Америка кĕтнине тивĕçтерме пултараймасть, США тарăхнă».

АМЕРИКА ИСПАНИРЕ ÇАР БАЗИСЕМ ТĂВАТЬ

«Санди таймс» хаçат США влаçĕсемпе франкистла Испани хушшинче тунă килĕшӳ çинчен

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди таймс» хаçатăн Мадридри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Испани авиаци тата тинĕс-çар базисене США-на тара парасси çинчен США-па Испани пĕтĕмпех калаçса татăлнă. Франко мĕнле те пулсан ытларах укçа илме тăрăшнă. Халĕ вăл çак базăсене тара панăшăн малтан Трумэн сĕннинчен икĕ хута яхăн ытларах, пĕтĕмпе 225 миллион доллара яхăн илет.

Килĕшĕва пилĕк çуллăха тунă. Килĕшĕве чарса лартасси çинчен нихăш енĕ те пĕлтермесен, килĕшӳ срокĕ тата тепĕр пилĕк çула тăсăлать. США Мадрид, Севилья тата Бургос районĕсенче — аэродромсем, çурçĕрте Ла Коруньре, кăнтăрта — Катисра, кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче — Картахенра тинĕс-çар базисем тара илет.

Герой-хула валли



Çурхуннехи ăшă кун. Атăл тинĕс пек сарăлса выртать. Йывăç-курăксем симĕсленме пуçларĕç. Çĕршыв çурхи илемлĕ тум тăхăнать. Çак хаваслă кунсенчен пĕринче Шупашкарти вăрман хатĕрлекен организацишĕн пĕриншĕн тата Шупашкар пристанĕн коллективĕшĕн уйрăмах пысăк савăнăç пулчĕ. Вĕсем пирĕн республикăри ĕççыннисен ячĕпе герой-хулана — Сталинграда кăçал малтанхи хут пысăк сулăна ăсатрĕç.

Шупашкар тĕлĕнчи затон. Кунта хĕллехи вăхăтра хĕрӳллĕ ĕçлерĕç. Вăрман касакансем хатĕрленĕ *йывăççене кунта турттарса килчĕç.* Вăрман касакансемпе турттаракансем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн кĕрешрĕç. Сулă юхтаракансем çав йывăççенчен сулăсем турĕç. Атăл шывĕ тулчĕ, затонри сулăсене çĕклерĕ. Сулăсене Атăл тăрăх Тăван çĕршыври тĕрлĕ вырăнсене илсе каяççĕ. Вăрманта ĕçленĕ кашни ĕççынни хăй каснă, турттарнă йывăç кирлĕ çĕре хăвăртрах çитессе шанать, ĕмĕтленет.

— Герой-хула Сталинград валли ку йывăç!

Çак хыпара пĕлтерсен сулă юхтаракансем уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕç. Кашни рабочи кулленхи задание ялан иртгерсе тултарнă. Сулă туса çитермелли задание коллектив темиçе кун малтан тата иртгерсе пурнăçланă. Планпа 20 пин фестметр сулă тумалла пулсан, 24.174 фестметр чухлĕ тунă.

Акă сулă хатĕр. Çур километр тăршшĕ вăл. Сарлакăшĕ 72 метр. Çӳлĕшĕ вара икĕ метра яхăн.

— Пысăк сулă, кăçал кун пеккипулман-ха,—теççĕ кунта ĕçлекенсем.

— Пулать, Козьмодемьянскинчен гигант-сулă анать, курса савăнăр,— теççĕ пристань çинче ĕçлекенсем сулă тăвакансене.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем хатĕрленĕ сулăна илсе кайма «Мурманск» буксир килнĕ. Унăн капитанĕ юханшыв флотĕн лейтенанчĕ, Сталинла преми лауреачĕ В. Я. Луцков—Атăл çинчи чи ăста капитансенчен пĕри.

— Эсир хастарлă ĕçлесе лайăх сулă тунă, задание срокчен пурнăçланă. Эпир те тăрăшăпăр. Пĕр *буксирпа пин вагон чухлĕ йывăç* илсе каясси çăмăлах мар. Апла пулин те задание срокра кăтартнинчен маларах пурнăçлама тăрăшатпăр,— тет вăл.

Кăнтăрла иртни икĕ сехет. Буксир сигналпа якорьсене çĕклеме команда парать. Сулă çинчи рабочисем якорьсене çĕклеме тытăнаççĕ.

Хаваслă ĕç юрри Атăл тăрăх инçене илтĕнет.

Тепĕр икĕ сехетрен пурте хатĕр. Хăватлă Атăл шывĕ сулăна хăйпе пĕрле юхтарса илсе кайма пуçларĕ. «Мурманск» буксир ăна затонран ăста илсе тухса Атăл тăрăх çул тытрĕ.

Пăрахут юлашкинчен сывпуллашса кăшкăртать.

— Сывă пулăр, пирĕн парнене герой-хулана — Сталинграда лайăх çитерсе парăр!—ала суласçĕ çыран çинчен.

Н. МИНИН.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталинграда илсе кайнă сулă Шупашкар тĕлĕнчи затонра. Çаврашкара—«Мурманск» буксир капитанĕ, Сталинла преми лауреачĕ В. Я. Луцков юлташ.

Фотоӳкерчĕкĕ Г. ЗИНЬКОВĂН.

Сулă юхтарнă çĕрте

ЕТĔРНЕ. Сулă юхтарма тытăннăранпа Сăр хĕрринче хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Рабочисен ĕçне тĕрĕс организациленĕ, бригадăсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарни ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма, тухăçлăрах ĕçлеме май парать. О. Федорова юлташ ертсе пыракан бригада нормăна куллен 130—135 процент тултарать. П. Медведев юлташ ертсе пыракан бригада нормăна малтанхи кунсенче 150 процент тултарса пычĕ, халĕ 170—175 процент таран пурнăçлать. Баржăсем çине юман вутти, клепка тиекен бригадăсем те нормăна чылай иртгерсе тултараççĕ.

Ĕç хыççăн бригадăсенче канашлусем пулаççĕ. Паянхи ĕç итогĕсене пăхса тухаççĕ, ыран тумалли ĕçсем çинчен сӳтсе яваççĕ. Сулă юхтарма пынă рабочисемпе колхозниксем хушшинче массăлла-ăнлантарулла ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Агитаторсем кашни кунах калаçусем иртгереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Пристаньре хĕрлĕ кĕтес пур. Бригадăсем мĕнле ĕçленине палăртма кăтарту хăми тунă. Агитаторсем социализмла ăмăртăва, малта пыракансен ĕçри опытне анлăн сарса пыраççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

* * *

Хĕр юханшывĕ пысăк мар. Кунта шыв çуркунне пĕр эрне хушши çеç тулли пулать. Ĕлĕкрех ун тăрăх йывăç юхтарма май çук тесе шутланă. Юлашки çулсенче Йĕпреçри вăрманпромхоз коллективĕ çак юханшывпа усă курас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртгерчĕ: пĕрене юхтарма кансĕрлекен тункатасене, урлă выртакан йывăççене тасатрĕ.

План тăрăх вăрманпромхозăн кăçал 13.800 кубометр йывăç юхтармалла пулнă. Çак задание вăрманпромхоз коллективĕ чыслă пурнăçларĕ. Сулă юхтарас ĕçе Г. Рябкинпа А. Михайлов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç, йывăрлăхсене çиĕнчех пĕтерсе пычĕç.

А. ИВАНОВ.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа

КАНАШ. Ямankaсси ял Совечĕ суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлама тытăнчĕ. Кăçал фермăсем çывăхĕнче икĕ пусă чаврĕç, халĕ çав пусăсенчи шывна усă курма пуçларĕç. Ял хушшине тата тепĕр тăватă çăл чавса пура яма, кĕперсене юсаттарма йывăç илсе пынă. Çавăн пекех вулав çуртне юсаттарма та материалсем хатĕрленĕ.

Ял Совечĕ самообложени укçи пухса пĕтерчĕ.

И. МУКШИН.

Колхозри радиоузел

СĔНТĔР. Нумаях пулмасть «Слава» тата «Путь Ильича» колхоз членĕсем радиоузел лартрĕç. Халĕ 360 килте тата обществăлла çуртсенче радио калаçать. Колхозри радиоузел урлă вырăнти передачăсем парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Микрофон умĕнче колхоз председателĕпе бригадирсем, дояркăсем тата малта пыракан колхозниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсем час-часах тухса калаççĕ. «Юлашки хыпарсен» передачисенче çурхи ака ĕçĕсем колхозра мĕнле пулса пыни çинчен, ака ĕçĕнче палăрнă уйрăм колхозниксем çинчен, çул юсанă çĕрте ĕçлекен çамрăксен бригадин ĕçри ӳсĕмĕсем çинчен пĕлтерсе тăраççĕ.

Павлов юлташ ертсе пыракан ялти лектори членĕсем радио тăрăх лекцисемпе докладсем вуласа параççĕ. Нумаях пулмасть, колхоз членĕсем «Çĕнĕ пилĕк çуллăх план», И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем», «И. В. Сталин—çĕнтерӳсен ялавĕ» темăсемпе лекцисем итлерĕç. Унсăр пуçне, Павлов, Анисимов, Сергеев, Михайлов лекторсем микрофон умĕнче «Кĕрхи калчасене çуркунне пăхса ӳстересси», «Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ», «Тасалăх—тĕрлĕ чир-чĕртен кĕрешмелли чи хăватлă май», «ССР Союзĕн государство заемĕсем» темăсемпе калаçусем иртгерчĕç.

Ялти клуб çумĕнче художествăлла пултарулăх коллективĕ радио тăрăх концертсем парать.

Г. СЕРГЕЕВ.

ПĔЛТЕРНИ

Майăн 13-мĕшĕнче, 19 сехетре. КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекен политшкул руководителĕсен тата И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Уставĕ».

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—вырăсла спектакльсем: майăн 13-мĕшĕнче «Твое личное дело», майăн 14-мĕшĕнче «Дама невидимка», майăн 15-мĕшĕнче «Богатырский сказ». Спектакльсем 20 сехетте 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—майăн 13-мĕшĕнпе 14-мĕшĕнче кăнтăрла Чехословакире ӳкернĕ илемлĕ çĕнĕ фильм «Завтра будут танцевать всюду», сеанссем 12 тата 14 сехетре пуçланаççĕ: каçхине—илемлĕ çĕнĕ фильм-спектакль «Лес», сеанссем 16 сехетре, 18 сехетте 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Ултă республикăри çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ

РСФСР Сывлăх министерствин физкультурăпа спорт ĕçĕсен Главнăй управленийĕ майăн 14—16-мĕшĕсенче хуласемпе облаçсенчи тата крайсемпе автономиллĕ республикăсенчи çăмăл атлетсен сборнăй командисен ăмăртăвĕсене иртгерет. Çак ăмăртусем Сталинград, Ярославль, Грозный, Псков, Владимир, Чита, Шупашкар, Сталинск, Тюмень тата Благовещенск хулисенче пулса иртеççĕ.

Шупашкарта пулса иртекен ăмăртăва Тутар, Пушкăрт, Удмурт, Чăваш, Мордва тата Мари АССР-ĕнчи çăмăл атлетсем хутшăнаççĕ. Республикăсен сборнăй командисене хуласемпе ялсенчи спортсменсем кĕреççĕ.

Арçынсем 100, 400, 1.500 тата 5.000 метр хушшине ăмăртса чупаççĕ. Вĕсем çавăн пекех 110 тата 400 метр хушшине сиксе каçса чупмалли (барьерла чупу), чупса пырса инçете сикмелли тата сиксе каçмалли, вăрăм шалчапа сикмелли, сăнă, диск ывăтмалли ăмăртусене, тăваттăн 100-шер метр чупмалли эстафетăна, 10 километр утмалли тата ытти тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнаççĕ.

Хĕрарăмсем 100, 200 тата 400 метр хушшине ăмăртса чупаççĕ, 80 метр хушшине сиксе каçса чупмалли (барьерла чупу), чупса пырса инçете сикмелли тата сиксе каçмалли, тăваттăн 100-шер метр хушшине чупмалли тата ытти тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнаççĕ.

Спортсменсен çакăн пек пысăк ăмăртăвĕсене иртгерни вăл патша самани вăхăтĕнче хĕн-хур курса пурăннă халăхсем совет самани вăхăтĕнче телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнма тытăннине, вĕсем культура енĕпе пысăк ӳсĕм тунине пĕлтерет. Нациллĕ республикăсенчи спортсменсем пĕр кăмăллă пулса çакăн пек ăмăртăва хутшăнни вăл халăхсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пынине, вĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пынипе коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хастарлă кĕрешнине çирĕплетсе парать.

Шупашкарта автономиллĕ республикăсенчи спортсменсен спартакиадине 1939 çулта иртгернĕ пулнă. Ун чухне иртгернĕ ăмăрту программине çăмăл атлетикăсăр пуçне шывра ишмелли, баскетболла вылямалли тата пăшалтан тĕл пемелли ăмăртусене те кĕртнĕ пулнă. Çăмăл атлетсен Шупашкарта халĕ пулса иртекен ăмăртăвĕ пек ăмăртусене иртнĕ çулсенче ытти хуласенче иртгернĕ. Чăваш республикинчи спортсменсем çав ăмăртусенче пысăк çитĕнӳсем тăваймăн. 1951 çулта Хусан хулинче иртгернĕ ăмăртура, сăмахран, Чăваш АССР команди кайри вырăнсене йышăннă командăсенчен пĕри пулнă. Ăмăртăва 6 команда хутшăннă пулсан 5-мĕш вырăн çеç йышăннă. Иртнĕ çул иртгернĕ ăмăртăва пирĕн республикăран пачах та хутшăнман.

Кăçал пирĕн республика команди, паллах ĕнтĕ, хамăр республика столицинче иртгерекен ăмăртăва ăнăçлăрах хутшăнма пултарать. Командăна РСФСР-ти «Колхозник» спорт обществин чемпионĕпе рекордсменне Р. Бикчурин юлташа, çак спорт обществăри вăйлă спортсменсене Р. Камалтдинов тата Г. Юрьева юлташсене, Чăваш АССР-ĕнчи паллă спортсменсене — Е. Токарева, Л. Емельянова, Е. Мишенькина юлташсене тата пултаруллă ытти физкультурниксемпе физкультурницăсене кĕртнĕ. Сывă мар пулнă пирки çак ăмăртăва пирĕн республикăри вăйлă спортсмен, Совет Союзĕн рекордсменĕпе чемпионĕ А. Игнатьев юлташ хутшăнаймасть пулмалла. Çапах та ытти çулсемпе танлаштарсан пирĕн республика команди паха тĕслĕхсем кăтартма пултарать.

Юлашки çулсенче ăмăртăва хутшăнакан республикăсенче пултаруллă спортсменсем сахал мар ӳсе çитĕнчĕç. Уйрăмах Тутар, Пушкăрт тата Удмурт АССР-ĕсенче вăйлă спортсменсем ытлараххине палăртмалла. Пушкăрт АССР-ĕнче çак ăмăртăва хутшăнма спортсменсем суйласа илме ятарласа ăмăртусем иртгернĕ. Командăна чи паллă физкультурниксемпе физкультурницăсене кĕртнĕ. Ытти республикăсенчи спортсменсем те ăмăртăва тăрăшса хатĕрленнĕ. Паллах ĕнтĕ республикăсен сборнăй командисем хушшинче малти вырăнсене йышăнассишĕн (çав шутрах ялсенчи спортсменсем енĕпе те) вăйлă кĕрешӳ пулмалла.

Тутар АССР командине «Наука», «Искра», «Динамо» тата «Спартак» спорт обществисенчи, çавăн пекех институтсенчи чи пултаруллă спортсменсене кĕртнĕ. Командăра СССР спорт мастерĕсем Н. Зубрилова, Р. Орлова, А. Котов юлташсем пур. Спортсменсене ăмăртăва хутшăнма Колчинпа Митяшин тренерсем вĕрентсе хатĕрленĕ.

Удмурт АССР командине 5.000 тата 10.000 метр хушшине чупас енĕпе республика чемпионĕн ятне илнĕ В. Шарычев юлташа, 3.000 метр хушшине чупассипе республика чемпионĕн ятне илнĕ Костромин юлташа тата Удмурт республикинчи ялсенчи пултаруллă çăмăл атлетсенчен пĕрне Потехин юлташа кĕртнĕ. Çак спортсменсем хĕллехи вăхăтра йĕлтĕрпе ярăнмалли ăмăртусене активлă хутшăннă. Вĕсем ăмăртусенче пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Мордвапа Мари АССР-ĕсен командисенче пултаруллă çамрăксем чылай. Вĕсем хушшинче Саранскпа Йошкар-Ола хулисенчи спорт шкулĕсенче вĕреннĕ пултаруллă спортсменсем пур.

Çăмăл атлетсен Шупашкарта пулакан ăмăртăвне хутшăнма 100 спортсмен ытла пухăнмалла.

Çак ăмăртăва иртгерме судейски коллеги организациленĕ, унта 30 çын ытла кĕртнĕ. Судьясем хушшинче пирĕн республика представителĕсем нумай. РСФСР Сывлăх министерствин физкультурăпа спорт ĕçĕсен Главнăй управленийĕ Главнăй судейски коллеги составне çирĕплетнĕ. Главнăй судейски коллегинче: главнăй судья Спиридонов (Рязань хулинчен), главнăй судья заместителĕсем Афанасьев (Мускав хулинчен), Солдаченко (Шупашкар хулинчен); главнăй секретарь Слепенкова (Горький облаçĕнчен).

Ăмăрту ыран ирхине «Молния» спорт обществи стадионĕнче 10 сехетре пуçланса, виçĕ кун хушши пырать. Малтанхи кун арçынсем те тата хĕрарăмсем те 100 метр хушшине, арçынсем 1.500 метр, хĕрарăмсем—400 метр хушшине ăмăртса чупаççĕ. Çавăн пекех ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче вăрăм шалчапа сиксе каçмалли, чупса пырса инçете сикмелли тата ытти тĕрлĕ ăмăртусем пулаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—3-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01126 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.